76.17
Т33
Ч-41888

И.Я. ТЕНЮШЕВ

# ЛИТЕРАТУРА ЕНЁПЕ РЕДАКЦИЛЕССИ

Практикум

Шупашкар 2008

Национальная библиотека ЧР
4-041888

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

М т. 3 50 1990 г.т. 5000

К Обязат. экз.
76.17
Т 33

РАҪҪЕЙ ФЕДЕРАЦИЙĔН ВĔРЕНТŸ
ТАТА НАУКА МИНИСТЕРСТВИ
ФЕДЕРАЦИН ВĔРЕНТŸ АГЕНТСТВИ
И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕ

**И.Я. Тенюшев**

# ЛИТЕРАТУРА ЕНĔПЕ РЕДАКЦИЛЕССИ

**Практикум**

Кр

Шупашкар 2008

УДК 070
ББК 76 01
Т 33

**Рецензенты:**
д-р филол. наук, профессор В.И. Сергеев;
канд. филол. наук, старший научный сотрудник Г.А. Дегтярев

**Тенюшев И.Я.**
**Т33** Литературное редактирование: практикум/ И.Я. Тенюшев. – Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 2008. – 68 с.

Содержатся тексты для практических занятий, контрольные работы и упражнения для самостоятельной работы. Цель издания – помочь студентам овладеть навыками литературного редактирования. Приведены корректурные знаки, используемые журналистами при редактировании, а также правила составления библиографического списка.

Для студентов IV курса факультета журналистики, работников средств массовой информации и книжного издательства и всех, интересующихся журналистикой.

Утверждено Методическим советом университета

Отв. редактор профессор А.П. Данилов

М-41888-ОЭ

НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ
РЕСПУБЛИКИ

УДК 070
ББК 76 01
©Тенюшев И.Я., 2008

ПРОВЕРЕНО
2010
15 ИЮН 2017

## СТУДЕНТ – ПУЛАС ЖУРНАЛИСТ

Студент – пит маттур ăру,
Чĕринче ун ăнтăлу.
Пĕлӳ илет, ăс пухать,
Ăста журналист пулать.

Журналист – канăçсăр чун:
Усăсăр ан ирттĕр кун!
Ырă çынна мухтасам!
Ăстиçука ятласам!

Чĕлхӳпе эс чул кастар.
Пул хăюллă та хастар.
Кĕртмесессĕн алăкран –
Кĕр те тăр эс кантăкран.

Çыр тĕрĕссине кăна,
Çивĕчлĕх кĕртсе тăна.
Çитĕнтер хирте тыр-пул!
Станок умĕнче те пул!

Ăçта çитсе тухатăн,
Кама кăна куратăн –
Эсĕ, журналист, ан ман:
Упрасам чысна ялан!

Тӑван халӑх культурин патриархӗ И.Я. Яковлев
ҫапла каланӑ: чӑвашӑн ҫӗр пин сӑмах,
ҫӗр пин юрӑ, ҫӗр пин тӗрӗ.
Чӑваш чӗлхи чӑнах та пуян.
Ку чӗлхери сӑмахсемпе темле кӑткӑс шухӑша та
витӗмлӗн каласа пама, ытарайми илемлӗ
ӳкерчӗксемпе сӑнарсем хайлама пулать.

## Умӗн калани

Пурте пӗлетпӗр: Раҫҫейӗн пӗрремӗш ҫынни, унӑн президенчӗ В.В. Путин 2004 ҫулхи нарӑс пуҫламӑшӗнче пирӗн республикӑри Шӑмӑршӑра пулчӗ. Унта Игорьпе Таня Матвеевсен килӗнче чей ӗҫрӗ.

В.В. Путин Матвеевсен йӗкӗрешӗсене пуҫӗсенчен шӑлса ачашлать, ҫемҫе теттесем – упа ҫурисем – парнелет. Кил хуҫисене вара Санкт-Петербург хули 300 ҫул тултарнӑ ятпа ятарласа туса кӑларнӑ фарфор бокалсемпе чей савӑчӗсем парнелесе хӑварать.

– Ачасем чӑвашла пӗлеҫҫӗ-и? – кӑсӑкланать В.В. Путин.

– Эпир чӑваш вӗт, ачасене чӑвашла та, вырӑсла та вӗрентетпӗр, – хуравлать Таня. Игорь вара ҫапла хушса хурать:

– Манӑн арӑм чӑвашла та, вырӑсла та, тутарла та пӗлет.

Владимир Владимирович йӑл! кулса илет те Матвеевсене телейпе ҫирӗп юрату сунать.

– Татах килӗр! – тесе ӑсатаҫҫӗ Таньӑпа Игорь хаклӑ хӑнана.

Ку тӑрӑха ҫавӑн пек сумлӑ пысӑк пуҫлӑх килсе курни историе кӗрсе юлакан тӗлӗнмелли пулӑм. Пире В.В. Путин Матвеевсенчен «Ачӑрсем чӑвашла пӗлеҫҫӗ-и?» – тесе ыйтни уйрӑмах кӑмӑла килчӗ. Эппин эпир президентшӑн чӑваш пулнипе хаклӑ.

Пирӗн сумлӑ ентешӗмӗр Г.Н. Волков академик тӗрӗсех ҫапла каларӗ: «Раҫҫей хӑйӗн чӑвашӗсемпе мухтанма тивӗҫ» (Т-р: Хыпар. 2006. Ҫурлан 10-мӗшӗ). Геннадий Никандрович ҫав йыша Н.Я. Бичурин (1777-1853), И.Я. Яковлев (1848-1930), А.Г. Николаев (1929-2006) тата ытти нумай-нумай чаплӑ йӑхташсемсӗр пуҫне тӑван чӗлхепе манӑҫми хайлавсем хӑварнӑ М.Ф. Федоров (1848-1904), К.В. Иванов (1890-1915), П.П. Хусанкай (1907-1970) ҫыравҫӑсене кӗртет.

Вĕсен еткерне манма пултарăпăр-ши эпир? «Халăха тăван чĕлхене манма хушни çав халăха вилме хушнипе пĕрех», – тенĕ чăвашсен аслă çутлăхçи И.Я. Яковлев.

Паллă сăвăçăн сулмаклă сăмахĕсем аса килеççĕ:

Пĕчĕк халăхсем çук тĕнчере,
Хăй чĕлхи, хăй юрри кашнинех.
Хăйĕн ăсĕ те шухăшĕ,
Хăй вăл пĕрре –
Çавăнпа килнĕ халăхăм
Çак çĕр çине….

Çак халăх хăйĕн пурнăçĕнче çут çанталăк пурлăхĕпе ырлăхĕсене мар, çĕр çинче ĕçлессине, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессине, алă вăйĕпе усă курассине, кĕскен каласан, производствăри ĕçе мала хунă. Çавăнпа ку халăхран ытгисен вĕренмелли çук мар.

«Пирĕн тĕллев – Чăваш Республикине Раççейри чи пысăк пĕлӳллĕ тата пуян кăмăл-сипетлĕ регионсен шутне кĕртесси. Тăван халăхшăн тăрăшни – телей, çак шухăша яланах пуçра тытар. «Чăваш пĕтсен – тĕнче пĕтет» текен шухăша асра тытар та çанна таврăса хамăр халăхшăн ĕçлер, вĕренер, тĕпчер», – чĕнет пире И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн ректорĕ, Раççейри Вĕрентӳ академийĕн чăн членĕ Л.П. Кураков. Тĕнчипе паллă чăваш ăсчахĕн чĕнĕвĕ журналистсене те хал парать, тăрăшарах ĕçлеме хавхалантарать. Угакан вара малаллах каять.

Тăван чăваш чĕлхи, унăн юрри-кĕвви кашни ентешĕн чунне сим пыл пекех кирлĕ. «Аван-и? Хĕвел тухнине куртăн-и? Хĕвелпе калаçрăн-и?» – тăван чĕлхепе сывлăх сунаççĕ пĕр-пĕрне Çĕпĕрти чăвашсем. «Ĕмĕрех хĕвел тухтăр ирсерен выляса, ĕмĕрех савăнтăр чăваш хĕвелпе калаçса….»

Çакăн пек паха ĕмĕт упрать Д. Яхват сăвăç хăйĕн чĕринче. Чăваша вăл хĕвелпе чăвашла калаçтарасшăн.

Пушкăрт халăх поэчĕ Мустай Карим мĕн калани аса килет: «… Чăваш чĕлхи хăйĕн илемĕпе, çепĕçлĕхĕпе манăн чĕрене ĕмĕрлĕхех вырнаçрĕ». Чăнах та чăваш чĕлхи техĕмлĕ те илемлĕ. Унпа таса калаçмалла, тĕрĕс çырмалла. Чĕлхе саккунĕсене пăхăнмасăр, унăн морфологийĕпе синтаксисне пĕлмесĕр, орфо-

графипе пунктуацие ӑса хывмасӑр тӗллев тивӗҫлӗ пек пурнӑҫа кӗреймӗ. Атӑла алтӑрпа, тинӗсе витрепе ӑсса типӗтеймӗн. Ҫавӑн пекех ӑслӑлӑх вӗрентӗвӗсӗр таса калаҫаймӑн, тӗрӗс ҫыраймӑн.

«Вырӑсла чиперех ҫыратӑп, чӑвашла тӗрӗс ҫырма ниепле те хӑнӑхаймарӑм-ха. Правилисем тӗктӑмал вӗҫӗмсӗр улшӑнса тӑраҫҫӗ», – ӳпкелешет ман пӗр юлташ. Чӑнах та правилӑсене вӗҫӗмсӗр улӑштарни мӗнле пайта кӳрет-ши? Чӑвашлӑх ҫӗнӗлӗхӗ-и ку? Дон Кихот ҫил арманӗсемпе тытӑҫнине аса илтерет ҫакӑ.

Сӑмах та ҫук, чӗлхене вӗренмелле, чӗлхене вӗрентмелле. Ку пӗр кунта пулмалли ӗҫ мар. Ятарласа вӑхӑт уйӑрмалла, ыйхӑ тат-са ӗҫлемелле. Хатӗрленӗ правилӑсем тӗрӗс те ҫирӗп пулччӑр!

Тӑван халӑхне телейлӗ малашлӑх сунса, ЧР Президенчӗ Н.В. Федоров ЧНК VI Аслӑ Пухӑвӗнче 2005 ҫулхи пуш уйӑхӗн 19-мӗшӗнче акӑ мӗн каларӗ: «Чӑваш нацийӗ – тымарсен пӗрлӗхӗ, пӗр пӗтӗм шӑпа, пӗр пӗтӗм чӗлхе тата культура. Вӑл пирӗн нимӗнпе хаклама ҫук истори пуянлӑхӗ – ӑна упрамалла, ҫитес ӑрусене памалла». Ҫапла майпа эпир наци сӑн-сӑпатне кӑна мар, хамӑр халӑха, асаттесемпе асаннесем пурӑннӑ, аттесемпе анне-сем пурӑнакан Чӑваш Ене упраса хӑварма пултаратпӑр.

Эх, тӑван чӗлхемӗр, эсӗ иксӗлми хӑватпа пуян. Ҫакӑ пулать те ӗнтӗ чӑвашсене пӗр нацие чӑмӑртакан вӑйсенчен пӗри. Тӑван чӗлхемӗр те чӑн-чӑн чӑвашлӑх! Унпа пирӗн пин-пин ҫул туп-таннӑ ӑс-тӑн, кӑмӑл-сипет, йӑла-йӗрке. Ҫак пуянлӑха малашлӑх валли те упраса хӑварма пултарсан, унӑн хӑватне ҫултан-ҫул ӳстерсех пырсан, пин-пин сӑмахлӑ, пин-пин юрӑллӑ-несӗллӗ, пин-пин тӗрӗллӗ Чӑваш Ен ҫак ҫӗр ҫинче татах та татах пурӑнӗ, ҫуначӗсене анлӑрах та анлӑрах сарса пырӗ.

Сӑпайлӑ мар пулсан та, ҫапла калар: литература енӗпе ре-дакцилессине вӗрентни тӑван чӗлхене упрасчӗ тесе тӑрӑшни пу-лать, хамӑрӑн пепкемӗрсем те аслашшӗн-кукаҫӗн, асламӑшпе кукамайӗн, ашшӗпе амӑшӗн чӗлхипе калаҫмалла тӑвассишӗн вӑй хуни пулать.

Чаплӑ сӑвӑҫӑмӑр П.П. Хусанкайӑн пророкла сӑмахӗсем аса килеҫҫӗ: «Эпир пулнӑ, пур, пулатпӑр!». Йышлӑ чӑваш халӑхӗн хӳхӗм чӗлхи пирки те ҫакнах каламалла. Эппин ку чӗлхепе ре-дакцилеме вӗрентни паянхи «Аптраман таврашсене» те кирлех.

Публицистика, илемлӗ литература тата ӑслӑлӑх хайлавӗсене литература енӗпе юсаса лайӑхлатасси – вӗсене ҫутӑ кун кӑтартма

хатĕрлессин питĕ кирлĕ яваплă тапхăрĕ. Кĕнекен тĕллевĕ – литература енĕпе редакцилессин теорийĕ никĕсĕсемпе паллаштарасси, текстсене юсаса хатĕрлессин ăслайĕсемпе усă курма хăнăхтарасси. Çав теори никĕсĕсене вырăс тата чăваш ăсчахĕсемпе журналисчĕсен тĕпчевĕсене хывнă, хамăр ку ĕçре пухнă опыта пĕтĕмлетнĕ.

Ку предмета аслă вĕренӳ заведенийĕнче вĕрентме пуçлани нумай пулмасть-ха. Кунашкал кĕнеке кăçал пĕрремĕш хут пичетленет. Тĕслĕхсене пĕтĕмпех республикăри прессăран илнĕ. Ăçтан илнине кирлĕ мар çĕрте кăтартмасăрах хăвартăмăр.

Кĕнекере чылай сыпăка чăваш тексчĕсене редакциленĕ чухне тĕл пулакан йывăрлăхсене шута илсе йĕркеленĕ. Ку ушкăна «Юлташ» сăмахпа усă курасси», «Ятсемпе хушаматсене çырнă чухне асра тытмалли правилăсем», «Хаçат-журналта хисеп ячĕсемпе усă курасси» тата ытти темăсене те кĕртмелле.

Кĕскен хушса панисем пирки. Корректура вулană тата редакциленĕ чухне чăваш журналисчĕсем вырăс журналисчĕсен ĕçĕ-хĕлĕнчи паллăсемпех усă кураççĕ. Библиографие çутатмалли тата çăл-куçсене кăтартмалли правилăсем вырăссеннипе пĕрешкелех. Ку паллăсене тата правилăсене И.К. Гужова, Р.А. Молибоженко, К.М. Накорякова тата Т.И. Сурикова хатĕрлесе кăларнă «Литературное редактирование: Материалы для занятий» кĕнекерен илсе чăвашла куçартăмăр (М.: Изд-во МГУ, 2000).

Редактор ĕçĕ пĕртте çăмăл мар, кăткăс та яваплă. Япăх хатĕрленĕ ал çырăвне редакцилесси çĕнĕрен çырассинчен те йывăртарах тенине илтетĕн тепĕр чухне. Ку чăнах та çапла. Редакторăн ал çырăвĕн уйрăмлăхĕсене, хăйне евĕрлĕхне, автор стильне упраса хăварма тăрăшмалла-çке-ха. Унăн чĕлхе перекетлĕхĕшĕн те тăрăшмалла.

Виктор Гюго чи кĕске çыру авторĕ пек паллă. Сутуçăран унăн «Отверженные» романĕ мĕнле сутăннине пĕлес тесе Гюго ун патне çыру ярать, çырура пĕр паллă çеç пулнă: «?». Кĕнеке сутуçи те пĕр паллăллă çыру çырать: «!». Роман лайăх сутăннă! Гонорар виçи 400 пин франка çитнĕ! Пирĕн вăхăтра та ку питĕ пысăк укçа.

«Хыпар» хаçатра Хайхи автор çапла çырать: «Ют чĕлхе пит аван пулсан та вăл пирĕн мар, çыннăн, çын лаши темĕн тĕрлĕ

маттур пулсан та ун çине утланса ларса хам лаша тесе мухтанса çӳреймĕн, темĕн тĕрлĕ чаплă пуян çын тумтирне тăхăнса хам тумтирĕм тесе калаймăн, хăвăн пулсан ытлашши чиперех пулмасан та шанчăклă пулĕ, мĕншĕн тесен сана: çын япалипе анчах ырă куратăн, хăвăн нимĕскер те çук, тесе калакан пулмĕ». (Хыпар, 1906. Пуш уйăхĕн 12-мĕшĕ).

«Тăван чĕлхепе çырулăх – этемĕн «пурнăç тĕрекĕ те хавхаланăвĕ, чун-кăмăл уççи те йăпанăвĕ, ăс-тăн шухăшлавĕ», – аса илтерет пире Осип Андреев çыравçă. Анне кăкăрĕн сĕчĕпе ăша илнĕ чĕлхене упраса хăварасчех. Литература енĕпе редакцилессин хăнăхтарăвĕсем çак тĕллеве пурнăçлама пулăшчăрах. Хăнăхтарусен тĕллевĕ уçăмлă: кашни чăваш журналисчĕ тăван чĕлхепе тĕрĕс калаçтăр, тĕрĕс те тĕллевлĕ, сăнарлă çыртăр. Вĕсем чăваш чĕлхи пуласлăхĕшĕн çунакансем пулма тивĕçлĕ.

«Европăра пур чĕлхене те çичĕ-сакăр çул хушшинче вĕренме пулать, анчах тăван чĕлхене ĕмĕр тăршшĕпех вĕренмелле» (Вольтер, француз философĕпе çыравçи).

## ПĔРРЕМĔШ ÇУР ÇУЛ

Килте пурнăçламалли ĕçсем

Пĕрремĕш заняти

Çак пуплевсене тĕрĕслĕр. («Эпир, Шупашкар районне кĕрекен Етĕрнекасси ялĕнче пурăнакансем ....»).

Иккĕмĕш заняти

«Ĕненмерĕç ун чухне хăшĕ-пĕрисем» текста редакцилесси.

Виççĕмĕш заняти

«Абитуриентсен сочиненийĕсенчи йĕркесене редакцилĕр».

Тăваттăмĕш заняти

«Çуралчĕ», «вилчĕ», «терĕ» сăмахсен синонимĕсене тупăр, вĕсене вырăсла куçарăр. Тĕслĕхсем вуннăран кая мар пулччăр.

Пиллĕкмĕш заняти

Тĕрĕслев ĕçĕ тăвасси: «Хĕветĕр пчеловодсен канашлăвне каять».

### ПĔРРЕМĔШ ПРАКТИКА ЗАНЯТИЙĔ

*1. Сăмах çаврăнăшĕсене тĕрĕс йĕркелĕр.*

Çав çулхине шултра майракаллă выльăх питех те сахалланса юлчĕ. Пĕр уйăх хушши Белосток хулине хӳтĕленĕ çĕрте тăтăмăр. 1954 çулта ултă уйăх хушши шофера вĕрентĕм те ĕçлеме пуçларăм.

Вăл кӳрışĕллĕ килтех çуралса ӳснĕ. Пӳлĕме çыхнă шапка тăхăннă ача кĕчĕ. Хăнасем сăн ӳкерĕнчĕç.

Хулара сехетри хăвăртлăха 60 километртан ирттерме юрамасть. Петĕре ытларах ăнчĕ.

Шăлаварпа-брюкипе çӳреççĕ хĕрарăмсем.

Парикмахерски алăкĕ çине «Пуç касакан» тесе çырса хунă. Аттепе анне пулсассăн, пирĕн çуртăм ăшăрах.

Савнă тусăм, çывăх тусăм,

Ман ҫине эс ан кӳрен.

Сывалсанах сан ҫине авланатӑп. Купӑс ҫинче нумай кӗвӗсем вылятӑп. Ах, мӗн пулчӗ манпа, ҫамрӑкпа!

*2. Килте тумалли ӗҫ. Ҫак предложенисене тӗрӗс редакцилӗр.*

Эпир, Шупашкар районне кӗрекен Етӗрнекасси ялӗнче пурӑнакансем, вӑхӑтра хаҫат-журналсем илсе вулаймастпӑр. Утӑ пухса кӗрес ӗҫе паха туса ирттермелле.Ҫак пӗчӗк ҫеҫ хӑртнӑра паян иртеннех лӑпкӑ мар, ӗҫпе юрӑ уявӗ – акатуй кӗрлет. Кунта йӗркипех плакатсемпе лозунгсем, кӑррипех тӗрлӗрен стендсем, колхоз ӳсӗмӗпе аталану ҫулӗсене кӑтартакан диафрагмӑсемпе перспективӑсем. Корреспонденцисемпе материалсенче вӗсем хӑйсен съезд умӗнхи шалти чун-чӗрери шухӑш-кӑмӑлӗ ҫинчен каласа панӑ.

## ИККӖМӖШ ПРАКТИКА ЗАНЯТИЙӖ

*1. Сӑмахпа тӗрӗс усӑ курнӑ-и? (Аудиторире пурнӑҫламалли ӗҫ).*

Юрать-ха хӗр-упраҫӑн хумхантаракан кӗввине утарҫӑ ҫуртӗнче тӑнлакан пулмарӗ, вӑл такамӑн чӗрине те ыраттарнӑ пулӗччӗ. Никамӑшпе те калаҫса татӑлман-ха, художествӑлла пултарулӑх ушкӑнне йӗркелемен-ха. Эс хӑйне час-частарах курма тӑрӑш. Ҫуллӑ ҫирӗм те ӑша йӑпатма вӗри чейне ӗҫем-ха пӗр чӑмӑр. Хамӑн мамака эп аллӑмӗш ҫулсенчех сӑваплисен шутне кӗртсе хамӑн пӗр кӗнекере ҫырса кӑтартнӑччӗ.

Кулленхи ӗҫре преступленисене сирсе ярас тата вӗсене уҫса парас тӗллевпе право хуралӗнчи органсен сотрудникӗсем информаципе шутлав системин пулӑшӑвӗпе усӑ кураҫҫӗ, вӑл шанчӑксӑр, айӑпланакан, судпа айӑпланнӑ ҫынсемпе тата преступленисемпе ҫыхӑннӑ сведенисене вӑхӑтра илме май парать.

М. Данилов Чӑваш ял хуҫалӑх институтӗнчен куҫӑмсӑр майпа агронома вӗренсе тухнӑ. Пӑшалтан пени илтӗннӗ. Пӑшалтан персе суранлатнӑ. Тупӑпа персе амантнӑ. Тупӑ етри амантнӑ.

Çывăх вăхăтра Çĕрпӳри ял хуçалăх техникумĕнче механик пулма хатĕрленекенсем диплом хӳтĕлеççĕ.

Тин кăна хĕсметрен таврăннă Сергей Степанов ГАЗ-53 машина çине ларни уйăх та çитмен-ха, Сергей Чистополь хулинче куçăмсăр майпа автомеханика та вĕренет.

Йĕркелӳ комиссийĕ тунă йышăнура пĕчĕк бизнесра палăрнă çитменлĕхсене пĕтермелли майсене кăтартса панă.

*2.Килте тумалли ĕç. Çак предложенисене пичете кирлĕ пек юсăр.*

Ĕненмерĕç ун чухне хăшĕ-пĕрисем. Эсир музыкăна юрататăр, хăвăр мĕн çинче те пулин вылятăр-и? Хăй шухăшлă, пичĕсем пĕркеленнĕ. Ара, ку Ботина Ольга медсестра-çке. Хĕр ача, шкултан вĕренсе тухсан медсестра пулма ĕмĕтленнĕскер, 1941-мĕш çулта Шупашкарти медтехникумран вĕренсе тухать. Çав хушăра мĕн чухлĕ йывăрлăхсем пулнă пулĕ унăн умĕнче. Хăшĕ-пĕрисем ялти пурнăçа тиркесе хулана тухса каяççĕ. Пăрахут çӳлелле хăпарать. Хыçалти касра хĕрсем вăйă пуçарнă. Вăл каччă умĕнче çухалса кайрĕ. Пăшал стена çинче çакăнса тăрать. Хамăн шалти шухăш-кăмăла каласа парап. Эпĕ рояль çинче вылятăп. Шлепке айĕнчен ман çине икĕ куçсем пăхаççĕ.

## ВИÇÇĔМĔШ ПРАКТИКА ЗАНЯТИЙĔ

*1. Май пур çĕрте «ĕç» тата унран пулнă иккĕмĕшле сăмахсенчен хăтăлăр.*

### Хастарлă ĕçлеççĕ

Вуннăмĕш пилĕкçуллăхăн малтанхи виçĕ çулĕнче Ленин ячĕпе хисепленекен колхоз выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем туса илес тата ăна государствăна сутас енĕпе çителĕксĕр ĕçлесе пычĕ. Кăçал пĕрремĕш квартал иртсе кайрĕ, анчах колхозри выльăх-чĕрлĕх пăхакансен ĕç результачĕсем каллех савăнтармаççĕ. Çак пысăк ĕç çине колхозра çителĕклĕ таран пăхни сисĕнмест-ха. Майракаллă шултра выльăхсем самăртнă çĕрте те ĕççем чаплă мар. Ĕне выльăхсем усракан витесем санитари тĕлĕшĕнчен

кирлӗ шайра мар, вентиляци системи ӗҫлеменнине пула сывлӑшра аммиак шӑрши нумайччен тытӑнса тӑрать, микроклимат начар, нӳрлӗх пысӑк. Анчах колхозра ӑрата лайӑхлатса пырас енӗпе ҫителӗксӗр ӗҫлеҫҫӗ. Сӗт пахалӑхне ӳстерес тӗлӗшпе Шаптакри ферма ӗҫченӗсем ырӑ тӗслӗх кӑтартаҫҫӗ. Юлашки ҫичӗ уйӑхра председатель фермӑсенче икӗ хутчен кӑна пулнӑ, терӗҫ выльӑх-чӗрлӗх патӗнче ӗҫлекенсем. Пултаруллӑ ӗҫченӗн ҫитӗнӗвӗ кунти ытти дояркӑсене тата пысӑкрах ӳсӗмсем тума хавхалантармалла. Анчах та малта пыракансен опытне анлӑрах сарас енӗпе япӑх ӗҫлеҫҫӗ.

*2. Килте пурнӑҫламалли ӗҫ: «Абитуриентсен сочиненийӗсенчи йӗркесене редакцилӗр».*

Эпӗ артист пуласшӑн. Хамӑн ӗмӗре сцена ҫинче ирттересшӗн: унтах пурӑнӑп, ҫӗрӗпех ҫывӑрмӑп.

Ваттисем каланӑ сӑмахсем манӑн ҫемҫе чӗрене питӗ йывӑррӑн пырса тиveҫҫӗ, хуйхӑртаҫҫӗ.

Пирӗн чӑваш чӗлхи – ӑшӑ та ҫепӗҫ чӗлхе.

Халӑх сӑмахлӑхӗ – чӑн ахах-мерчен. Ӑна питӗ асӑрханса ярса тытмалла.

Ҫеҫпӗл Мишши ҫырнӑ поэмӑсене, романсене чӑваш халӑхӗсем халӗ те юратса вулаҫҫӗ.

Мана «Нарспи» поэмӑра Нарспи тискерлӗхе хирӗҫ пуҫӗпе кӗрешни, хӑйӗн упӑшкине вӗлерни килӗшрӗ.

Тем калӑр та, хальхи пурнӑҫ лайӑх ҫав: пирӗн атте-аннесем «Сникерс», «Баунти» йышши шоколадсем ҫисе те курман вӗт. Темскер ҫитмен ҫав вӗсен пурнӑҫӗнче.

Учитель вӗрентсе кӑларнӑ ачасем тӗнче уҫлӑхне парӑнаҫҫӗ.

Эпӗ хамра ҫынсене култарма пултаракан сисӗм пуррине туйса илтӗм, артист пулма пуҫларӑм.

Чӑваш литературине нӑкӑрах ӑнланас тӗлӗшпе нумай кӗнекесем вулама пуҫларӑм.

Эпӗ шкул пӗтерсен мӑн ҫын пулма ӗмӗтленетӗп, университета мӑннӑн вӗренме кӗрес тетӗп.

Ӗлӗк чӑвашсем «Алран кайми аки-сухине» юрланипех пурӑннӑ, халӗ вара «Атьӑр, хӗрсем, вӑрмана» та «Пурнӑҫ питӗ лайӑх, питӗ лайӑх…» тесе кӗрлешеҫҫӗ, ватӑ чӑвашсен кукшисене тарӑхтарса пӗркелентереҫҫӗ.

## ТĂВАТТĂМĔШ ПРАКТИКА ЗАНЯТИЙĔ

1. *Ятсемпе хушаматсене тĕрĕс çырнă-ши?*

Кĕтÿçĕсем Михаил Егоровпа унăн мăшăрĕ Антонина Ивановна пăрусем вылянине мăнукĕсене пăхнă пек ăшшăн пăхса тăчĕç.

Плотниковсен ачисем те ашшĕ-амăшĕ пекех ĕçчен ÿснĕ. Юра чылай çулсем хушши хăвăрт утас енĕпе республика чысне хÿтĕленĕ, халĕ спорт комментаторĕ.

Юбилей ячĕпе саламланă май Варнава митрополит чиркÿ мухтавĕшĕн тăрăшса ĕçленĕшĕн ялти çĕр ĕç фирмин коллективне, Николай Федоров предпринимателе тата Кристина Трифоновна Еремеева пенсионеркăна архиерĕн грамотипе наградăларĕ.

Петров юлташ е юлташ Петров? Эсир, юлташ матрос, хăвăр мĕн сыхланине пĕлетĕр-и?

Пирĕн ентешсем Васильев Çемен тата Митрофанов Иван вăрçă фронтĕнче иккĕшĕ пĕрле пулнă. Çакăн хыççăн Оксана Илларионова хушаматлă хĕрарăм патне çитнĕ.

Эпĕ вара И.С. Максимов-Кошкинские Н.К. Чернышев-Шетмĕне спектакль валли музыка çырма шанни çинчен пĕлтертĕм. Акă, тĕслĕхрен, Мускав хулинчи Фрунзенски районта ирттернĕ тĕпчев ĕçĕсен анализне илсе пăхар.

Н.Е. Салтыков-Щедрин хайлавĕсем килĕшеççĕ-и сана? Тантăшăм «Краса севера» чие сортне ырлать. Макар мана макăртать, Сахар сахăр çитерет.

«Хыпар» хаçат Надежда Смирновăн «Çеçпĕл Мишшине Чăваш Ене куçарса килĕпĕр-и?» тата Валери Туркайăн «Тăпри çинчен куртăр Çеçпĕл ват Шупашкара» статйисене пичетлерĕ.

Жуков Женя хăйĕн ăсталăхне «№ 1» упражненире тĕрĕслĕ.

2. *Килте тумалли ĕç.* «Çуралчĕ», «вилчĕ», «терĕ» сăмахсен синонимĕсене тупăр, вĕсене вырăсла куçарăр. Тĕслĕхсем вуннăран кая мар пулччăр.

## ПИЛЛĔКМĔШ ПРАКТИКА ЗАНЯТИЙĔ

*Тĕрĕслев ĕçĕ пурнăçласси. Çак предложенисене пичете юрăхлă тăвăр.*

Хĕветĕр пчеловодсен канашлăвне кайма тесе райцентра тухса кайрĕ. Федоров Иван ĕнтĕ çирĕм çул ытла спецавтофургонсем тăвакан заводĕнче столяр пулса ĕçлет. Вăл кунта техникăлла училищинчен вĕренсе тухнă хыççăн килнĕ. Халĕ вăл заводра чи ăста та пултаруллă специалистсенчен пĕри пулса тăрать. Кашни сменăри нормăна тенĕ пек 120 % пурнăçлать.

Районти мĕн пур колхозсем государствăна тырă сутмалли плана иккĕ çура хут ирттерсе пурнăçларĕç. Пиллĕк çуллăх заданине те пĕтĕмпех тултарчĕç. Ленинпа «Новый путь» колхозсем пиллĕкçуллăхри заданине 176-шер % чухлĕ ирттерсе тултарма пулчĕç. Ленин ячĕпе хисепленекен колхоз хамăрăн Тăван çĕршывăмăр валли 1, 100 ытла центнер паранкă сутса ку çулхи плана тултарчĕ.

Улмуççи йывăççисемпе чие тĕмĕсем хушшинче кайăксем çӳресе йĕр тунă. Чаплă юбилейсем умĕнхи тапхăрта тухнă номерсенче вырнаçтаракан материалсен литература шайĕ те ӳсрĕ. Осипов кунта халăх пĕр шухăшлă пулсан тем тума та пултарнине кăтартса парасшăн пулнă. Çак драмăна вулакансем пурте юратса вулаççĕ. Айтара хирĕç никам та тăрайман. Мĕншĕн тесен вăл пысăк пăлхану чухне пăлханакан çынсене тыта-тыта пама пулăшнă. Вĕсем Сентиере вута пăрахасшăн Сентиер çурчĕ патне пыраççĕ. П.Н. Осипов ку драма никĕсне Атăл тăрăхĕнчи 18-мĕш ĕмĕрте тӳре-шарапа улпут пусмăрне хирĕç кĕрешни çинчен каласа кăтартать.

## УЛТТĂМĔШ ПРАКТИКА ЗАНЯТИЙĔ

*1. Тимлĕрех тишкерĕр-ха: логика йăнăшĕсем çук-и? Еплерех юсама май пур?*

Ял хуçалăх производство кооперативĕн правленийĕ сĕт суса илессине ӳстересси çинчен ятарласа ыйту сӳтсе яврĕ, çавăн хыççăн ĕнесем самаях сĕт хушрĕç.

Шăнкăрав янăранă хыççăн студентсем аудиторие кĕрсе шăпланма та ĕлкĕрейменччĕ, класа аллине сăран портфель тытнă лутрарах çын васкаса кĕчĕ. Университетăн тĕп корпусĕ тăрăх шăнкăрав янăраса кайрĕ. Урок пуçланнине систерсе, вăл иккĕмĕш хут шăнкăртатса илчĕ.

Эпĕ бухгалтерта ĕçлетĕп, çавăнпа пушă вăхăта художествă пултарулăх кружокне паратăп. Мана службăна ирттерсе апатçимĕç складĕнче хăварма ыйтатăп, мĕншĕн тесен эпĕ тинĕсе юратса пăрахрăм.

Пирĕн ялти Галя Лыскова хĕр ача ыттисенчен уйрăмах палăрса тăрать: вăл халь çамрăк-ха, апла пулин те иккĕмĕш çул фермăра ĕçлет. Çапла кунсерен ӳссе, аталанса пыраççĕ çамрăк хурăнсем, çамрăксене вĕсем Тăван çĕр-шывăн чăн-чăн патриочĕсем пулма, ăна чун-чĕререн юратма вĕрентеççĕ.

Василий Пушкин çул çине пуçа сыхламалли шлемсăр тухнă. Вăл мотороллерпа тикĕс çул çинчен сирпĕнсе кайнă, аманнă. Шлем тăхăннă пулсан, вăйлă аманман та пулĕччĕ.

1875 çулта И.Я. Яковлев Хусан университетĕнчен вĕренсе тухать. Унăн малашнехи кун-çулĕ чăваш халăхне çутта кăларас, чăваш ачисене хута вĕрентес, халăх хушшинче усăллă пĕлӳсем сарас ĕçпе çыхăнса тăнă. Çав çулах ăна Хусан вĕрентӳ округĕнчи чăваш шкулĕсене пăхса тăракан инспектор тата Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн инспекторĕ туса хураççĕ.

Вартан Махмудовăн мăшăрĕ Йĕпреçрен. Совет Союзĕ арканса кайнă хыççăн вĕсен çемйи тек унта тĕпленсе пурăнас темен. Рая /Вартанăн арăмне çапла чĕнеççĕ/ хистенипе Махмудовсем пилĕк çул каялла Чăваш çĕр-шывне, вăрманпа, юхан шывсемпе пуян Йĕпреç тăрăхне куçса килнĕ.

*2. Рефератсен темисемпе паллаштарасси, вĕсем тăрăх студентсен ăслăлăх конференцийĕнче доклад тума хатĕрленесси.*

1. Хальхи пресса чĕлхи пирки пуçа килнĕ шухăшсем (пĕрпĕр уйрăм кăларăм тăрăх).
2. Радиохыпарлавăн хальхи чĕлхи пирки эпĕ мĕн шутлатăп.
3. Телекуравăн чĕлхи епле пулмалла.
4. Техника редакторĕн тĕллевĕсем.

5. Шухăшлав йăнăшĕсенчен хăтăласси.

6. Студентсем хăйсем сĕнекен темăсем.

Çакнашкал рефератсем çырнин тĕллевĕ – студентсене наци хаçат-журналне тăтăш вулама, радиохыпарлавпа телекурав кăларăмĕсене куллен тăнлама, вĕсене журналист ăс-хакăлĕпе хаклама хăнăхтарасси. Реферат çырни ăслăлăх енĕпе малалла тăрăшас туртăм çуратмалла.

## ÇИЧЧĔМĔШ ПРАКТИКА ЗАНЯТИЙĔ

*1. Публицистика чĕлхине вăйлатмалли майсемпе усă курнин тĕслĕхĕсене тупăр, вĕсен ячĕсене калăр, тĕллевĕсене кăтартăр. (Кузнецов, Г. Саккуна пăхăнатăн – лăпкăнах пурăнатăн /Г. Кузнецов / /Хыпар. – 2008. - Нарăсăн 1-мĕшĕ.* (Аудиторири практика занятийĕнче пурнăçламалли хăнăхтару)).

Çут тĕнче ырлăхĕпе туллин киленме килекен кашни çынах пурнăç çулĕпе тĕрĕс те пĕр пăркаланмасăр утассине тĕпе хурать. Анчах та саманисем саккăр, тамашисем тăххăр тенешкел, кунçул ăна мĕнле тĕрĕслевсем витĕр кăна кăлармасть-ши? Пурăнан пурнăçра хĕвелĕ те хĕрӳ шевлисенчен çыхнă «кĕлтине» унăн çулĕ çине сарса хурать, çурçĕртен вĕрекен çилĕ те çан-çурăма çӳçентерсе кăмăл-туйăма пăрлантарасшăн, анчах ырă ĕмĕт-тĕллевпе çула тухнă çын нимĕнле чăрмав-каска умĕнче те чарăнса тăрасшăн мар, пĕр вĕçĕмех малалла талпăнасшăн. Çапла тумалла та. Пурнăç – çĕр тĕрлĕ пăрăнăç тесе ыт ахальтен каламан ваттисем.

Чăнах та, паянхи тĕркĕшӳллĕ пурнăç пин тĕрлĕ ыйту кăларса тăратать. Пурте тата вăраха ямасăр татса памаллискерсем, ырана хăварсан каю шăтма пултарать. Çакăн пек вĕркĕшӳллĕ-хĕвĕшӳллĕ лару-тăрура сана «хĕрхенекенсем» те тупăнаççĕ: вĕсем санăн кирек мĕнле ыйтăвна та кĕске вăхăтрах пурнăçламашкăн шантараççĕ. Паллах, çавăн пек тăрăшнăшăн çул çинче ăнсăртран тĕл пулса паллашнă ырă çынна кăмăл тума тивет санăн. Эсĕ, ĕç-пуç çапла çаврăнса кайнăшăн виçесĕр хĕпĕртесе ӳкнĕскер, «хура кун» валли перекетлесе тытакан укçуна та шеллесе тăмастăн, хăвна тараватлăн пулăшма шухăш тытнă çынна пĕр пус юлмичченех парса яратăн. Анчах та пĕр кун иртет, иккĕ,

эрне, уйăх…. Ăçта вăл сана шантарнă ырлăх? Пыл пек пылак, çу пек çемçе чĕлхепе пуплесе инкеке лекнĕ çыннăн пуçне çавăрнă «агент-ваккатăн» йĕрне ăçта шырамалла кун хыççăн? Сахал-и тĕл пулатпăр пурнăçра çавăн пек лару-тăрăва пырса лекнисене. Афера танатинче хăйсене калама çук ирĕклĕн туякан ултавçă йышлансах пырать хальхи саманара. Енчен те эсĕ, ырă çыннăм, хаклă вулаканăм, куллен-кун питех те кирлĕ вăл е ку саккун пĕлтерĕшне тĕрĕс хак пама пултаратăн тăк, кутăн чăмакан аптранă кăвакал вырăнĕнче пулмастăнах. Сана, тем тесессĕн те, шăнман пăр çине лартса яраймастех ăнсăртран килсе тухнă «кукка». Халĕ мĕн куратпăр? Пĕри хваттерсĕр тăрса юлнă, теприн дачине хăйĕнсĕрех такамсем сутса янă, виççĕмĕшĕн çĕр лаптăкĕ çинче кўрши хуçаланать т. ыт. те. Пире йăнăш çулпа утма хистекен-хĕтĕртекен «шуйттана» пуриншĕн те айăплани тĕрĕс мар пулĕччĕ. Ытларах чухне эпир хамăр айăплă-çке, анчах та çавна шăпа нуши вирлĕн пырса тивнĕ хыççăн тин лайăх туйса илетпĕр.

Çакăн пек шухăш патне пырса тухрăм эпĕ Раççей телекуравĕн пĕрремĕш программипе тăтăшах эфира тухакан «Федеральный судья» кăларăмпа паллашсах тăнă май. Раççей телеканалĕн иккĕмĕш программипе те «Суд идет» кăларăм кăтартаççĕ. Ытти канал редакцийĕсем те суд тата право ыйтăвĕсемпе хатĕрлекен сюжетсене тĕп вырăнта тытаççĕ. Хаçат-журналта та манăçа хăвармаççĕ çавна. Пĕтĕмлетерех каласан, пирĕнтен кашниннех çĕршыври Уголовнăй кодексăн статйисене пăртак та пулин пĕлмеллех. Европăри патшалăхсенчи граждансен шайĕпех танлашаймасассăн та - ку енĕпе «ликбез» пĕтермеллех пирĕн. Хальлĕхе право йĕркисене хăйĕн пилĕк пўрни пек лайăх пĕлнипе кам мухтанма пултарĕ? Епле кам? Тăван килне тĕрмепе улăштарнă çын! Чĕрре кĕрсе ан тупăшсамччĕ, вулаканăм, паянхи куна ирĕкрен хăтарнă çын пек УК статйисене мăйăр катнăн «шĕкĕлчекене» кăнтăрла хунарпа шырасан та тупаймăн. Анчах та манăн чунран-вартан хисеплекен вулакана ун çумне тăратас кăмăлăм çук.

Çын шăпи – пулă хуппи мар. Унпа мечĕкпе перкелешнĕ пек те выляма çук. Ку шухăша тĕпе хурсан «Федеральнăй судья» проекта çул панă авторсен ĕçĕ тав сăмахне епле ан тивĕçтĕр? Малтанхи вăхăтра, ăна-кăна тавçăрса иличчен, «сенкер экран»



Национальная библиотека Чувашской Республики
Ч-41888-03

çинче мĕн кăтартнине эпĕ пĕтĕмпех пĕр-пĕр район е хула сучĕпе ларăвĕнче ÿкернĕ репортажсем вырăннех йышăннăччĕ. Анчах та каярахпа, вĕсем шоу-спектакль пулнине пĕлсен, кăмăл хавхаланăвĕ самаях чакнăччĕ манăн. Халĕ каллех пуçра малтан çирĕпленнĕ шухăш патне çитсе чарăнтăм: ан тив, шоу-спектакль кăна пултăр вăл, халăха вара паянхи арпашуллă та пăтрануллă саманара сывлăш пекех кирлĕ çавăн йышши кăларăмсем. Пăхнă хыççăн тарăн шухăша путтăр куракан-вулакан: саккунсене çирĕп пăхăнасчĕ, йĕркене пăсас марччĕ. Инкек тусан, айăпа кĕрсен УК еплерех вирлĕн хĕстерет! Фемидăна парăннă çынсем «шăрпăклă» сак çине килсе лекнисенчен çирĕп ыйтаççĕ çав! Хÿтлĕх-пулăшу сĕнекен «ырă куккасем» çук унта. Саккунсене лайăх пĕлекен тÿрĕ çулран пăрăнмастех. Пăрăнас пулсан хăйне мĕн кĕтессине уçăмлăн чухлать вăл. Тĕпрен илсен, пирĕнтен ытларахăшĕ УК, нормативлă ытти актпа документсенче кăтартнисене пурнăçа кĕртнĕ чухне ăнланулла. Право тĕлĕшĕне çирĕпленнĕ вăйлă патшалăхра пурăнас тетпĕр пулсан пирĕнтен кашнинех кирек мĕнле саккуна та пăхăнмалла, ыттисене те çавăн пек çул-йĕр çине тăма хистемелле. Кирек кам та ваккат пулăшăвĕпе усă курмасăрах лару-тăрăва хак пама, хăйне канăçсăрлантаракан ыйтусен хуравне тупма пултартăр. Тепĕр тесен, çакна çитме пĕрре те йывăр мар. Саккуна пăхăнса лăпкăн пурăнмалла кăна…

*2. Халăх сăмахлăхне чăвашларан вырăсла куçарăр*

Айăпа кĕр. Турти кĕске. Хăлхи шăтăк. Алли кукăр. Çара çерçи. Çара пакарта. Кăмăлна йывăр ан ил. Харам пул. Ăшчикки хура кăмрăк ун. Пуç тÿпи питĕрĕнмен. Шампа хырăм. Ури çине ĕне пуснă. Вĕсем шăн пăр çинче тăрса юлнă.

*3. Халăх сăмахлăхне вырăсларан чăвашла куçарăр*

Самая страшная «пробка» случилась на ядринской дороге. Ей подавай луну жареную. Он точь-в-точь отец. Из грязи в князи. Бить баклуши. Нет худа без добра. Попасть под горячую руку. Все трын-трава. Всыпать по первое число. Гол как сокол.

Круглая сирота. Полусирота. Девушка на выданье. Обвести вокруг пальца. Освятил. Поставил цель. Очно. Заочно.

## САККĂРМĔШ ПРАКТИКА ЗАНЯТИЙĔ

*1. Çак предложенисене пичете юрăхлă тăвасчĕ. Шухăш тĕрĕслĕхĕн вĕçне-хĕрне тупасчĕ.*

Чун туртнăран хĕсметрен таврăнсан та Руслан Вика хыççăн чылай чупрĕ. Юркин Иван Николаевич 1863 çулхи 28-мĕш мартра Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи Пăва уесне кĕрекен Пăрантăк вулăсĕнчи Пӳркел ятлă ялта удел хресчен кил-йышĕнче çуралнă. 1882 çулта вăл Чĕмпĕр уездĕнчи вулăссенче çыруçă, унтан писарь помощникĕ пулса ĕçлет. К.В. Иванов ячĕпе хисепленекен Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăланă Чăваш патшалăх опера театрĕ кăçал çĕнĕ сезон уçрĕ.

Хĕветĕр пчеловодсен канашлăвне кайма тесе райцентра тухса кайрĕ. Художествăлла пултарулăх кружокне вăл чылайранпа пултаруллăн ертсе пырать. Çемьене «çĕнĕ кайăк» хутшăннă. «Хыпарăн» утă уйăхĕн 1-мĕшĕнче тухнă 131-мĕш номерĕнче Элли Иллен «Пирĕн ял мĕн ятлă?» статйи пичетленсе тухрĕ. Юрланă чух юрă сăмахĕсене туйăмсăр юрламалла марри пирки асăрхаттарчĕ. Эпир питĕ хамăр чĕлхене тăрăшса вĕренетпĕр. Выльăх-чĕрлĕхсем витисенче ĕçлеме механизаторсем яланлăхах уйăрса панă.

Эпĕ глобус туянтăм. Хамăр яла ун çинче кунĕпех шырарăм. Тупайманнипе тарăхрăм та арăмпа хирĕçрĕм.

Вĕсем ларекран виçĕ арпус, шăккалат, груша, виноград, ултă пачкă сигарет тата сехет вăрласа тухнă. Пурне те çисе янă.

Тĕрĕсленĕ вăхăтра суту-илӳ тума ирĕк паракан лицензи тата сутуçă çăмарти çинче тăмха палли пулман.

Эпир юлташпа лавккана кĕнĕ чухне йытă урамрах юлчĕ. Хыççăн ун патне участок милиционерĕ пынă та çапла хушса хăварнă: «Хуçу ман пата кĕтĕр».

Купăса тăсса яратăп –
Савни тăтăр ташласа!

Шăна кăмпи пуçтаратăп –
Ăна çитĕр савăнса…

Салара çулла пит канăç,
Курортри пек туйăнать…
Çунтарать шăна-păванĕ,
Тамăк евĕр курăнать!

Зиновия Сергеева 1925 çулта Муркаш районĕнчи Тури Панклире çуралнă, кăçал 85 тултарчĕ ĕнтĕ. Вăрçă пуçланать, хĕр 16 тултарнă тĕле ял пушанса юлать – каччăсемпе арçынсене çара демобилизацилеççĕ (Советская Чувашия. –2005. – Раштавăн 14-мĕшĕ).

*2. «Терĕ» глагола урăххисемпе ылмаштарăр.*

– Пирĕн «Айдар» спектакль валли костюмсем çĕнетмелле. Пĕтĕм вăя хурса, тата тăрăшарах вĕренмелле, - терĕ Митюкова артистка.

– Эпĕ кунта каланисемпе килĕшетĕп. Çапла! Ку пирĕншĕн питĕ пысăк задача: пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме тытăнас пулать, – терĕ Т. Соловьева артистка та.

– Ман шутпа, икĕ спектакль тата концерт пулать, çавăнпа пирĕн «кĕленче оркестрне» вăйлатмалла. Сергей Кириллович пире темиçе хут та баян туянма сăмах панăччĕ, анчах паян кун та баянĕ çук, – терĕ Н. Чернышев-Шетмĕ.

– Çапла çав, баянсене пирĕн республикăра сутмаççĕ, фестиваль валли ăна федераци управленийĕ урлă илме тăрăшăпăр, - терĕ театр директорĕ.

– Ку мана хытă савăнтарать, – тет Н. Чернышев-Шетмĕ.

– Тата кам калаçасшăн? – тетĕп эпĕ, артистсем çине пăхса.

– Мана сăмах парăр-ха, – терĕ Н. Кузнецова артистка. – Фестивальте виçĕ каç параççĕ пулсан – килĕшмелле.

– Пикенсе хатĕрленмелле. Кăçалхи сезон «фестиваль сезонĕ» пултăр, – терĕç пирĕн артистсем.

## ТĂХХĂРМĔШ ПРАКТИКА ЗАНЯТИЙĔ

*1. Литература енĕпе редакцилессин теорийĕ тăрăх доклад-сем итлесси, вĕсене сӳтсе явасси:*

1) редакцилессин теорийĕпе практики лингвистикăпа журналистикăн ытти дисциплинисем хушшинчи вырăнĕ;

2)текстсен тĕсĕсем тата вĕсене редакцилессин уйрăмлăхĕсем;

3) юсав тĕсĕсем, вĕсене пурнăçлассин йĕркисем.

*2. Пĕрешкел калăпри сăмахсенчен хăтăлма май пур-и?*

Эрешленĕ çунасем кӳлнĕ лашасем вăйăçăсене юмахри пек асамлă тăрăха илсе çитернĕ хыççăн конкурса хутшăннисем вак касса шыва кĕчĕç, унтан вĕри мунчара ӳт-кĕлеткине пиçĕхтерчĕç.

Вăрмар поселокĕнче алхаснă пушар сăлтавĕ те вут-çулăмпа асăрханусăр пулнипе çыхăннă. Çавна пула 1971 çулта çуралнă çамрăк арçын килĕнче пушар тухнă: хĕл валли хатĕрленĕ утă çунса кайнă, аслăк тăрри сиенленнĕ.

Район больницинче ача çуратакан уйрăмра ĕçлекен аслă акушеркăна Валентина Васильевна Карошинăна уяв ячĕпе ял-сенчен нумай-нумай саламсем яраççĕ.

Калчасем çине выльăхсемпе хур-кăвакалсем ярса ваттарас-сине тĕпрен сивлемелле. Вĕсем çырнă материалсенче йăнăшсем нумайййинчен тĕлĕнмеллисем нимех те çук.

Йĕкенпуç чăвашĕсем ял вулавăшне тăтăшах пырса çӳрекен сăлтавĕсенчен пĕри вăл – кунта чăвашла хаçат-журналсем çырă-нса илни. Ача-пăчасем савăнса чупкалашни курăнмасть.

## ТĔРĔСЛЕВ ВАЛЛИ ЯНТĂЛАНĂ МАТЕРИАЛ

*Кашни пуплеве уйрăммăн редакцилĕр.*

Вăл килсен эпир кимĕпе ярăннă, пулă тытнă, хăш чух пăшалтан пеме çӳренĕ… Вăл хăюллă çын пулнă. Çапла, унăн вăрçăри хăюлăхĕпе паттăрлăхĕшĕн панă «За отвагу» медалĕ 58 çултан – 2001 çулхи январьте тин тупăнчĕ. Вăрçă пуçланнă çу-

лах вăрçа тухса кайнă. 1988 çулхи мартăн 12-мĕшĕнче йывăр чирлесе выртнă хыççăн унăн куçĕсем яланлăхах хупăнчĕç. Вăрманкассем вăрçăччėнех икĕ хутлă колхоз правлени çуртне лартнăччĕ.

«Труд» стадионта хĕллехи вăхăтсенче тĕрлĕ ăмăртусем ирттерни те хытă савăнтарать. Çав вăхăтрах ыррипе пĕрлех япăххисем, киревсĕррисем те юнашарах. Токарь станокĕн шавĕпе йывăçран тĕрлĕ япаласем ăсталаççĕ. Эпĕ Сĕнтĕрвăрри районне кĕрекен Утаçкасси ялĕнче çуралса ӳснĕ. Тăвайккине лаша çитерме çӳренĕ, ĕнепе вăрмана кайнă. Уйăх хушши Атăл ку енчи Йăлăмра ĕне пăхнă. 1941-мĕш çулта Сăрьелĕнчи 7 çул вĕренмелли шкула пĕтерсен Етĕрнери педагогика техникумне вĕренме кĕнĕ.

## ХАРПĂР ХĂЙ ТĔЛЛĔН ПУРНĂÇЛАМАЛЛИ ХĂНĂХТАРУСЕМ

*1. Уйрăм предложенисене редакцилесси*

Паян вулакансене Тури Çĕрпӳкассинче пурăнакан Медведев педагогсемпе паллаштарасшăн. Ашшĕ, Андреев Андрей Филиппович, пĕрлешӳллĕ хуçалăхра тимĕрçĕ пулса тата кладовщикре ĕçленĕ. Мăшăрĕ тивĕçлĕ канăва тухса та Уйкас Юнтапари вăтам шкулта библиотекарь пулса ĕçлет. Вăл Вăрнар районне кĕрекен Мăн Элмен ялĕнче çуралнă. Шкул зданийĕ тавра карта тытса çаврăннă, панулми тата ытти çырла-йывăççисем лартса ӳстернĕ.

Атте, вун икĕ çулта вилнĕскер, мана ачашласа çитереймен. Рабочие кĕскетсе ĕçрен кăларнă. Юмăç Наталие ача чухнех учителе тухать тенĕ. Инвалидноç илни пенси виçине ӳстерме пулăшать-и? Христофор Колумб çул çӳресе тухаймасан та пултарнă. Чылайăшĕсем орденсемпе медальсем илме тивĕç пулчĕç. Николай хăшĕ-пĕрисем пек çар службинчен пăрăнма шухăшламан та.

*2. Çак алçырăвне тĕплĕн редакцилĕр, çĕнĕ ят парăр*

Телей ĕçре туптанать

Тулă пусси хĕррипе хывнă сукмак тăрăх комбинезон тăхăннă çамрăках мар арçын комбайнсем лартнă вырăналла васкать. Ку вăл комбайнсен бригадин бригадирĕ – Степанов Сергей Степанович. Сергей Степанович утнăçемĕн çӳлелле пăхса илчĕ. Сарă хĕвел хăй çине савса пăхнăшăн савăннăн тӳпере тăри юрă шăрантарать. Унăн кĕмĕл сассине çил хăваласа çитет те тулă пусси çийĕн аякка-аякка сапаласа ярать. Хушăран тăртаннă пучахсем хушшинчен путене юрлани илтĕнет.

Тинĕс пек хумханать тулă. Хăйсем çитĕнсе çитнине пĕлтерес тенĕ пек тулли пучахсем çĕре çитиччenex тайăлаççĕ.

– Ĕлкĕрмелле, халăх пурлăхне харама ямалла мар, – шухăшларĕ бригадир, васкаса утма тытăннă май.

Сакăр çул ĕнтĕ вăл вырма вăхăтĕнче комбайнпа ĕçлеме тытăннăранпа. Вĕсенчен икĕ çулне – бригадăра бригадир ĕçне туса пынă. Чыслăн пурнăçланă Сергей Степанович хăйне шанса панă ĕçе.

Çирĕм çулта механизатор ĕçне пуçăннă вăл. Тепĕр икĕ çултан сарă тинĕс карапĕн штурвалĕ умне ларнă.

Кăçалхи çанталăк уйрăмах çумăрлă пулчĕ. Йĕпе-сапа, паллах, вырмана ура хурса пырать, ăнăçлă ĕçлеме чăрмантарать. Кашни хĕвеллĕ кун хаклă. Кунсăр пуçне бригадăра çĕрлехи смена йĕркеленчĕ. Кунĕн-çĕрĕн тăрăшрĕç çĕр ĕçченĕсем тыр-пула тирпейлĕ пухса кĕртессишĕн. Пур чухне те пултаруллă Сергей Степанович, ытти çулсенчи пекех, кăçал та хăйĕн пултарулăхне кăтартрĕ. Чи лайăх комбайнер ятне çĕнсе илчĕ. Чăннипех те тивĕçлĕ çак ята вырма паттăрĕ. Ахальтен мар ăна ялта пурте хисеплеççĕ. Чун-чĕререн парăннă çĕр ĕçне çамрăк механизатор. Вăл хăйĕн пурнăçне ĕмĕр-ĕмĕрех çĕр ĕçĕпе çыхăнтарса, унра телей тупатех.

Юрий Федоров,
Цивильский район, д. Ново-Булдеево

## ПĔРРЕМĔШ ÇУР ÇУЛ

*Зачет тытмалли ыйтусем*

1. Литература енĕпе тата техника енĕпе редакцилесси.
2. Редактор текста хаклассин йĕркисем.
3. Корректура вуланă тата редакциленĕ чухне асра тытмалли пĕтĕмĕшле правилăсем.
4. Ал çырăвĕн культури.
5. Редактор – авалхи професси.
6. Редакцилемелли текстсен тĕсĕсем.
7. Шухăшлав е тишкерӳ тексчĕ.
8. Редакторăн пĕрремĕшле тата иккĕмĕшле вулавĕсем.
9. Палăрту тексчĕ.
10. Калуллă текста юсасси.
11. Корректорпа редактор ĕçĕсен уйрăмлăхĕсем.
12. Корректор тата редактор усă куракан расна паллăсем.
13. Саспаллисемпе хисеп ячĕсене, чарăну паллисене юсасси.
14. Наборти техника йăнăшĕсене тӳрлетесси.
15. Ал çырăвне юсассин тĕсĕсем.
16. Урăхлатса çĕнĕрен юсасси.
17. Ал çырăвне кĕскетсе юсасси.
18. Ал çырăвне периодика пичечĕ валли хатĕрлесси.
19. Ал çырăвне радиохыпарлав валли хатĕрлессин уйрăмлăхĕсем.
20. Телекурав валли материал хатĕрленĕ чухне мĕн асра тытмалла?

## ИККĔМĔШ ÇУР ÇУЛ

*Килте пурнăçламалли тата тĕрĕслемелли хăнăхтарусем.*

*Пĕрремĕш заняти*

«Санитарсен ăмăртăвĕ» заметкăна пичете хатĕрлĕр.

*Иккĕмĕш заняти*

«Здравствуйте, Николай Яковлевич!» çырăва чăвашла çырассин тивĕçлĕ картне лартăр-ха.

*Виççĕмĕш заняти*

Хăвăр тăрăхри топоними ячĕсем çинчен тĕрленчĕк çырса хатĕрлĕр, вĕсен историне çутатăр.

*Тăваттăмĕш заняти*

«Кĕнеке шыраса» корреспонденцие редакцилĕр, ун валли çĕнĕ ят тупăр.

*Пиллĕкмĕш заняти*

Тăрăхлавлă хушма ятсемпе хушаматсен пулăвĕ пирки массăллă информацин пĕр-пĕр хатĕрĕ валли материал янтăласа парăрччĕ.

### ПĔРРЕМĔШ ПРАКТИКА ЗАНЯТИЙĔ

*1.Материал композицийĕ пирки мĕн шутлатăр? Ун чĕлхинчи кăлтăксене палăртăр, текстра стиль кăлтăкĕсем асăрхамастăр-и? (Аудиторири ĕç).*

### Кам вăл Иисус Христос?

Иисусăн вĕрентĕвĕ хăйĕн ĕçĕпе уйрăлса тăман. Вăл пуринчен малтан хăйĕн çинчен мар, хăйĕн юратăвне ĕçпе çирĕплетсе ыттисем çинчен шутланă. Пĕррехинче Иисуспа унăн вĕренекенĕсем нумай çынна пулăшнă пирки çав тери ерçӳллĕ пулманнипе апат çиме те вăхăт пулман. Иисус Христос тĕнчери чи чаплă çын. Вăл мĕнле майпа Турă пулса тăнă? Унăн вĕрентĕвĕсене пурне те пурнăçламалла.

Анчах та ыттисемшĕн ырă тунă чухне Иисус Турă çинчен вĕрентнипе кăна çырлахман. Вăл ĕçпе пулăшнă. Вăл каланă:

«Çапла ĕнтĕ хăвăршăн çынна мĕн тутарасшăн, хăвăр та вĕсемшĕн пур тĕлĕшрен те çавнах тăвăр». Шутласа пăхăр кăна: Иисус Христос çинчен калакан пĕлӳ Райри ĕмĕрлĕх пурнăç патне илсе çитерме пултарать! Кашни кунхи ыйтусене татса пама пулăшакан Иисус канашăвĕсене христиан тĕнчи нумай вăхăта яхăн ĕнтĕ шута илмест.

Иисусăн пурнăçĕпе вĕрентĕвне пĕртак пăхса тухнипе кăна эпир ăна юратма пуçлатпăр тата вăл тунă пек ыттисем патне юрату кăтартас тетпĕр. Анчах та вăл пирĕн пурнăçа тивни çакăнпа пĕтмест-ха. Иисус юратма вĕрентекен аслă учитель кăна пулман. Вăл каланă тăрăх, çĕр çинче пуличчен вăл пĕлĕтре Туррăн пĕртен-пĕр ывăлĕ пулса пуранні.

– Эсир Иисус Христос камне пĕлетĕр-и? Вăл пуринчен малтан хăйĕн çинчен мар, ытти çынсем çинчен шутланă.

*2. Урăх чĕлхе сăмахĕсĕр май килмест-и?*

Раççей пĕлтерĕшлĕ пысăк мероприяти ăнăçлă иртсĕр тесен, ырăнти халăхăн çыруçăсене (çырав ирттерекенсене) шанни тата ĕненни кирлĕ. Вăл священник та, педагог та, христианствăна саракан та, куçаруçă та, общество деятелĕ те пулнă. Сăмах май, Шупашкар пушарнăйĕсен кирлĕ техника, оборудовани çителĕклĕ- и?

Сотовăй çыхăну пирĕн пурнăçа çирĕп кĕчĕ. Шутлă çулсенчех мобильнăй телефонсем куллен кирлĕ япаласем пулса тăчĕç.

Канаш тăрăхĕнче спорт сооруженийĕсем юсанса çĕнелни чи малтанах район руководителĕсен тăрăшулăхĕнчен килчĕ.

Священникăн тĕп тивĕçĕсенчен пĕри – çынна сăмахпа ĕнентересси.

Вăл телевизионщик пулса çуралнă тейĕн.

Суставсен шыççисенчен – маç.

Календулăран хатĕрленĕ сиплĕхлĕ чей приступсемпе кĕрешме, вĕсене пĕтерме пулăшать.

Караул тревога сигналĕпе шăп 8 сехетре ура çине çĕкленчĕ.

Çăматă, кĕске кĕрĕк, çĕлĕк тăхăннă красноармеецсене кĕçех Киева куçараççĕ, казармăсене вырнаçтараççĕ.

Раççей миротворецĕсем Кăнтăр Осетирен хăйсен ĕçне вĕçне çитермесĕр тухса каймĕç.

Вар-хырăм язви тата вун ик пумăклă пыршă чирĕсем чухне хĕрлĕ кăшман сĕткенне ĕçме юрамасть. Çапăçма пуçланă чухне арçын аллинче хоккей клюшки пулнă.

Британири чи ватă хаçатсенчен пĕри The Times интернетра хăйĕн телевиденине уçать.

Çак кунсенче тĕп престола çветит тунă ятпа унта савăнăçлă кĕлĕ ирттерчĕç.

Оруди кĕрĕслетрĕ. Оруди стволĕнчен вут-çулăм ăсанчĕ.

Латышсен стрелковăй дивизине служить тума лекет.

Слава орденĕн полнăй кавалерĕ Василий Федорович Золотин çинчен пирĕн нимĕнле даннăйсем те çукпа пĕрехчĕ.

*3. Заметкăна пичете хатĕрлĕр.*

Санитарсен ăмăртăвĕ

Иртнĕ кунсенче районти шкулсенче вĕренекенсем хушшинчи санитари посчĕсен ăмăртăвне пĕтĕмпе çичĕ вăтам шкул команди хутшăнчĕ. Унта малтанхи пулăшу панă чухнехи хăвăртлăха тата лайăх ĕçленине шута илнĕ. Ăмăртура пĕрремĕш вырăна Йĕпреç, иккĕмĕшне – Буинскпа Пучинке, виççĕмĕшне Хурамалти вăтам шкулĕсем йышăннă. Малти вырăна çĕнсе илнисене кубоксемпе вымпелсем тата значоксем парса наградăланă.

Г. Нестерова

## ИККĔМĔШ ПРАКТИКА ЗАНЯТИЙĔ

*1. Урăх чĕлхе сăмахĕсенчен хăтăлма пулать-и?*

Пĕрлехи пурлăхăн кашнин тӳпине палăртмасăр нихăшĕ те завещани хăварма та, ăна арендăлама та, парнелеме те пултараймасть. Çакăн хыççăн вилнĕ çыннăн частнăй харпăрлăхне наследниксене параççĕ. Пирĕнтен нумайăшĕн дача, çĕр участокĕ, вĕсемпе усă курас енĕпе договор пур. Пысăк улшăнусем пулса

иртнĕ эпохăра политикăри событисем çав тери хăвăрт килеççĕ. Шкул зданийĕ тавра ограда тытса çавăрнă. 1-мĕш сентябрьте практикăлла кунсем пуçланчĕç. Тĕнчери пĕрремĕш вăрçă халăха нуждасемпе испытанисем нумай кўнĕ.

Кĕрхи зябь вĕçленсенех çаклатмалли техникăна ремонт турĕç. Собранинче председатель каланă сăмахсем куç умне тухса тăчĕç. Самообложени шучĕпе ял Совет исполкомĕ çĕнĕ кĕпер тутарчĕ. Часы заводить тума вăхăт çитрĕ. Навус тăксан урожай лайăх пулать.

*2. «Здравствуйте, Николай Яковлевич!» çырăва чăвашла çырассин тивĕçлĕ картне лартăр-ха.*

Сирĕн пата пĕр просьбăпа студентка-заочница 2-го курса ЧО ИФФ чувашского отделения Еремеева Ираида Николаевна.

Николай Яковлевич, тархасшăн эсир мана унта отчислить ан тăвăр. Эпĕ тата зачетка çинчен веçех паллă тутарма ĕлкĕреймерĕм, мĕншĕн тесен, çав вăхăтра больницăра пулмалла пулчĕ. Экзамен манăн пĕр 18 векпа анчах сдавать туман, ыттисемпе веçех туса. Вот çавăнпа 20-го июня эпĕ корпус «Е» сирĕнпе калаçма кĕретĕп, тата зачетка çинчисене паллă тутарасшăн.

Николай Яковлевич, эсир манăн просьбăна ĕненессе шанатăп.

Сывă пулăр. 6/06-77 г.

## ВИÇÇĔМĔШ ПРАКТИКА ЗАНЯТИЙĔ

*1. Хисеп ячĕсене епле тĕрĕс çырмаллине аса илер-ха.*

Палламан йĕкĕт унăн малти 2 шăлĕсене çапса ватать. Хăйĕн пурнăçĕн 6 теçетке çулне вĕрентўпе ăслăлăха панă Василий Георгиевич. 1932 çулта Пуянкасси пуçламăш шкулĕнче 1-мĕш класра вĕренме пуçланă.

2008-мĕш çулта Шупашкарта хăвăрт утас енĕпе иртекен Тĕнче кубокĕн ăмăртăвĕнче те пирĕн ентешĕмĕрсем пысăк çитĕнўсемпе савăнтарĕç.

24 çĕртме – Республика кунĕ.

Курава 55 ăстан 200 ытла ĕçне илсе килнĕ. Обществăлла музейре тĕп фондăн 4,0 пин экспоначĕ упранать.

Пушкăртстанри 135 шкулта 8 пин ытла (53,4 процент) ача тăван чĕлхене вĕренет, 42 ача пахчинче 869 ача амăшĕн чĕлхине ăша хăвать.

9 сехетри рейса халăх лăках тулса ларчĕ.

Эпĕ 70 теçеткере пыратăп. Хаçатра икĕ кунсем кăна пулатăп. Кăçал хаçат ĕçĕпе çыхăннăранпа 50 çулталăк çитрĕ. Сывлăх сыхлавĕн тата социаллă политика аталанăвĕн министрĕ Нина Суслонова çакăн çинчен пĕлтернĕ: çу уйăхĕн 15-мĕшĕ тĕлне 6368 çурату сертификачĕ панă, сиплевпе профилактика учрежденийĕсене 24 000 000 тенке яхăн куçарнă. Юрать-ха, йышлă çемьери 5 ачи те хăйсем кăмăлланă ĕçсене суйласа илнĕ. Минифермăра 2 ĕне, 2 вăкăр, 4 сысна тытаççĕ. Кашни ирех Мария Алексеевна сĕт йышăнакан пункта тулли икшер витре йăтса каять.

Алкоголь продукцине сутасси çулран-çул ӳссех пырать. Хаксем çĕпре çинчи чуста пек хăпарни те ăна чараймасть. Пĕр çын пуçне вăтамран 15 литра яхăн сутăнать вăл.

Анне пил-пехилĕпе, вĕрентекенсен ăс-хакăл панипе аслă икĕ пĕлӳ илме май килчĕ.

3-4 апат кашăкĕ типĕтнĕ çăка чечекне 2 стакан вĕри шыва ямалла, 20 минут вĕретмелле, 36-37 градуса çити сивĕтмелле.

Мăшăрăм 26 çул каялла 73 çитсе вилчĕ, çакăншăн вăрçă пуçлакансене çеç вăрçмалла.

Агафия Михайловнăн 20 мăнук, мăнукĕн ачисем 32. Алексей ывăлĕн çеç 10 ача, вĕсенчен 6-шĕ аслă пĕлӳллĕ.

Ĕнер ирхине 3 сехет те 5 минутра Вăрнар-Канаш перегонĕн 663-мĕш çухрăмĕнче груз турттаракан пуйăсран 17 вакун уйрăлса юлнă.

3 ачана кун çути парса пурнăç çулĕ çине кăларнă Елизаровсем ватлăх кунĕсене иккĕшех ирттереççĕ. Тивĕçлĕ канăва тухнăранпа Пăтавăш шывĕ 15 хут пăртан тасалса хăйĕн хумĕсемпе 15 хут Кушлавăша юхтарĕ.

*2. Хăвăр тăрăхри топоними ячĕсем çинчен тĕрленчĕк çырса хатĕрлĕр, вĕсен историне çутатăр.Çак темăпа çырнă материалсен пухăмне хаçат валли туса парăр.*

Çывăх кĕтессем (тĕслĕх вырăнне)

Тăван ялăм, санран çывăх кĕтес пур-ши çĕр çинче? Тÿрĕ те таса урамсем, лапсăркка йăмрасем, мăнаçлăн ларакан чиркÿ, кĕрхи кăмпасем пек çĕкленекен капмар çуртсем – çакă мар-и вара вăл, чăн-чăн илем? Мĕне тăрать тата хула шавĕнчен ывăнса таврăнсан ял сывлăшĕпе сывлани, ял сăнĕпе куçа кантарни! Çапла тунсăхлатăп саншăн, ман çуралнă ялăм Алманчă.

Мĕнле пуçланса кайнă-ха пирĕн ял? Алманчă ял кĕнекинче И.Я. Тенюшев «Тутирекпе Севкке» ятлă илемлĕ истори халапĕ хайланă. Манăн çак халапа кĕскен çеç аса илес килет. Ял çумĕпе ÿсекен хыр вăрманĕнче, малти вăрман еннелле, Севкке лапамĕ пур. Çак вырăнта хăйсене валли хÿтлĕх тупнă пулать пĕр-пĕрне килĕштерекен пуян çемьере çуралнă Тутирекпе хресчен тимĕрç хĕрĕ Севкке. Анчах вăрманта нумай тăраймаççĕ вĕсем, ÿпресем аптратса çитернипе Шăнкăртам юханшывĕ урлă каçса хальхи Русак касси тĕлĕнче çĕр пÿрт тăваççĕ те унта пурăнаççĕ. Вĕсен икĕ ывăл – Турайпа Тумиле çуралать. Çавсене ĕнтĕ эпир Алманчă ялне никĕслекенсем тетпĕр.

Пирĕн ял çĕрĕ çинче историне кĕрсе юлнă вырăнсем тата темиçе. Хăрахкас урамĕнчен хире тухсан, сулахай енне пăрăнакан çулпа кайсан, айлăмарах вырнаçнă Пÿле çырмине çитсе тăратăн. Унта халĕ плотина, йĕри-тавра темиçе çул ÿсекен капмар хăвасем лапсăртатса лараççĕ. Астăватăп-ха, пĕчĕк чух, çуллахи кунсенче, çуранах Пÿлене чупаттăмăр, шыва та кĕнĕ, пулла та çÿренĕ пуль, анчах каялла таврăннă чухне пытана-пытана колхоз хирĕнчи пăрçана «вăрласа» килнисем халĕ те куç умĕнчех. Мĕншĕн Пÿле çырми тетĕр-и? Сĕм авал çак çырмаран тăварахра çар пуçлăхĕ «пÿлер» тăнă тет. «Пÿлер», «Биляр» сăмах пăлхарсен чĕлхинче çар пуçлăхне – арçынна пĕлтернĕ.

Пÿле çырминчен тăварах хăпарсан, Чăкăрчек сăрчĕ пур. Çак вырăнта Алманчă паттăрĕ Чăкăрчек Хусан ханĕн ирсĕрĕсемпе паттăррăн çапăçнă тет. «История Чувашской АССР» кĕнекере Вырăс тата Хусан çарĕсем çĕр çул ытла Чăваш Ен çĕрĕсем çинче

тытăçнисене тĕплĕн сăнласа кăтартнă. Шкулта вĕреннĕ чухне истори урокĕ вăхăтĕнче В.В. Волков учительпе Чăкăрчек вырăнне вăрçă хатĕрĕсене шырама çул тытнăччĕ. Ĕлĕкрех вăл тăрăхра окопсен ишĕлчĕкĕсем те палăрнă тет. Халĕ унта тухăçлă хир сарăлса выртать.

Алманчăн çурçĕр-хĕвеланăç енче Тимĕрле вырăнĕ пур. Ку тата мĕнле историрен-ши? Ватăсен сăмахĕсене ĕненсен, унта Уксах Тимĕр (Тамерлан) е вăл янă çар тăнă теççĕ. Историксем каланă тăрăх, Тамерлан çарĕсем кунтан мар, нумай кăнтăрарах иртсе пынă. Темĕнле çав, истори версийĕсен вĕçĕ те çук.

Малалла, Алманчăн историйĕпе паллаштарнă май, çакна та манса хăварам мар. Пирĕн яла Алманчă сали теççĕ, «сали» тени çак ялта сĕм авалтанпах чиркӳ пулнине пĕлтерет. Паянхи чиркӳ 1997 çултанпа ларать (1995 çулта тума пуçланă). Халăха Кире-метрен уйăрас шутпа, пирĕн ялта пĕрремĕш чиркĕве 1905 çулта хута янă тет. Вăл вăхăтри Киремет вырăнĕ – хальхи вăхăтри малти вăрман енче. Иртнĕ ĕмĕр çулĕсенче пĕрремĕш чиркӳ тунă хыççăн, чăваш ял халăхĕ мăнастир те лартма шут тытнă, анчах тĕпĕпех пурнăçласа çитереймен. Паянхи кунччен вара мăнастир çăлĕ çеç сыхланса юлнă. Ăна хăй вăхăтĕнче манахсем пура ярсах тунă тет.

Çакăн пек историне кĕрсе юлнă вырăнсем пур пирĕн ялта.

И.Г. Волкова

Ячĕсем çаплах упранаççĕ

Çырма-çатраллă вырăн чылай Сĕнтĕрвăрри тăрăхĕнче: Сырха, Хыр çырми, Картлай, Хаснар, Хурăн çырми, Чул çырми, Тустирик, Ахмат, Виснер, Сар пике, Сĕлĕ вăрри…

Кашнин ячĕпе историри пĕр-пĕр пулăм çыхăннă.

Сырха, Сĕмĕл – Октябрьски ялĕсем çывăхĕнчи улăх-çаран тăрăхĕ. Кунта вăрçăчченех кӳршĕ ял ачисемпе футболла вылянă. Вăта Пукаш, Çичĕпӳрт çамрăкĕсем хутшăннă унта.

– Сырха! – кăшкăрнă пĕри çăпати салтăнса кайсан теприне пулăшма ыйтса. Çапла каласа паратчĕ Сĕмĕлти чаплă футболист Люнкка Тагеев.

Чураш-Кивĕ Тукай тăрăхĕнче ӳссе çитĕннĕ, Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артисчĕ Петр Иванович Иванов каласа панă тăрăх,

Хурăн çырминче вăрçăчченех вăйлă хурăнлăх кашланă. Чул çырминче мунча кăмаки тума чул, хăйăр, тăм тупма май пулнă. Виснер, Шĕнерпуç, Çичĕпÿрт тăрăхĕсенче, Кунер, Шуршу пĕчĕк юхан шывсем çывăхĕнче Хветĕр Михали те, «Арçури» авторĕ, сунарта, пулăра вăхăтне пайтах ирттернĕ иккен.

Сарпике – Шĕнерпуçĕнчи илемлĕ хĕр ячĕпе çыхăннă вырăн. Кунта вăл çамрăклăхне ирттернĕ.

Сĕлĕ вăрри вырăнта вара хресченсем чÿк тунă, каярах сĕлĕ акса ÿстерме тытăннă.

Пукаш çывăхĕнче ав Итек çăлĕ паян кун та тапса тăрать. Çÿлелле те, тăвалла та çав ял çĕрĕсем пулнă имĕш. Тен, шăпах Хветĕр Михали кĕлте кÿнĕ ыраш пуссисем пулнă.

Кĕчкейре ÿснĕ, Кăнар поселокĕнче пурăннă Ираида Вдовина юрăç пĕр хĕрĕх çул каялла Энĕш юпписене тĕпчеме тухнăччĕ. Çук халĕ ун йышши тĕпчевçĕсем. Çырма-çатра ячĕсем вара паян кун та упранаççĕ.

Анатолий Пукаш, Сĕнтĕрвăрри районĕ

## ТĂВАТТĂМĔШ ПРАКТИКА ЗАНЯТИЙĔ

*1. Пĕрешкел калăпри сăмахсенчен, тавтологирен хăтăлма тăрăшăр*

Вĕренекенсем вăрçăра çапăçса пуçĕсене хунă салтаксене чысласа лартнă памятник умне чечек çыххисем хурса хăварчĕç. Тăвай районĕнчи Лачкасси ялĕнче тухнă пушарта пурăнмалли çуртпа кĕлетрен кăмрăкпа кĕл кăна юлнă. Калаçу ывăлĕ çине çитсен ашшĕ йышлă кĕнеке упракан шкап айĕнче ларакан баяна тĕллесе кăтартрĕ. Илĕртÿллĕ юрă-кĕвĕпе мĕн паян кунччченех туслă пулни çамрăк ăсчаха ывăнмасăрах ăслăлăх çул-йĕрĕпе шыравра пулма вăй парса тăрать. Ашшĕ Вăрмар районĕн культура пайĕн пуçлăхĕнче ĕçленĕ çулсенче уçнă Вăрмарти музыка шкулĕнче илнĕ пуçламăш пĕлÿ ачана консерваторие те илсе çитерме пултарман-ши вара? Вăрçă пуçлансан эпĕ фронтра пулнă: Эстонишĕн, Польшăшăн, Германишĕн пыракан çапăçусене хутшăннă. Республикăри Вĕрентÿ тата çамрăксен политикин министерстви «Юность России» физкультурăпа спорт обществи

пĕрле ирттерекен професси пĕлĕвĕ паракан училищĕсем спартакиадинче юлашки çулсенче комплекслă зачетра малти вырăнсене тăтăшах Сĕнтĕрвăрринчи 11-мĕш ПУ команди йышăнать. (Сидоров П. Каллех сĕнтĕрвăррисем малта / П. Сидоров. //Хыпар. – 2007. – Пуш уйăхĕн 1-мĕшĕ). Çав хушăрах асăннă районти Хĕрлĕ Октябрь ял тăрăхне кĕрекен ялсенче пурăнакансенчен (унта пĕтĕмпе 700 кил-хуçалăх ытла) тăватă çын кăна банкран кивçен укçа илме документ хатĕрленĕ. Каччă-хĕр шутне кĕнĕ ачусене мăшăрлантарнă чухне те хĕрӳн е ывăлун çемьеллĕ шăпи епле килсе тухĕ-ши тесе сахал мар шухăшланă ĕнтĕ. (Хыпар. – 2007. – Пуш уйăхĕн 15-мĕшĕ).

*2. «Кĕнеке шыраса» корреспонденцие редакцилĕр, ун валли çĕнĕ ят тупăр.*

Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланиччченех шкул ачисем валли учебниксем хатĕрлесе хураканччĕ, тата районти кĕнеке магазинĕнчех кирлĕ кĕнекесем тупса илсе çитерне. Манăн 5 класа тата 9 класа каякан Нинăпа Петя ачасем шкула çӳреççĕ, анчах та Красноармейскинчи кĕнеке сутакан магазина кĕрсессĕн, 5 класа шкула каякансем валли учебниксем пур-и тесе ыйтрăм. Манăн ачан пилĕк кĕнеке пур, географи, геометри тата ытти кĕнекисем çук.

Ятарласах эпĕ «Восток» колхозăн сĕт турттаракан автомашинĕпе кĕнеке туянма кайни тата вăхăта сая яни ахалех пулчĕ.

9-мĕш класа каяканни Петя валли кĕнеке шыраса Чарпуçне 8-9 çухрăма çурран (Канаш районĕ) утса кайрăм. Кĕнеке сутакан магазин ман телее хупă пулчĕ, ирĕксĕрех Шăхасана çул тытрăм вара. Ыртан унта çук пулнă пулсан, паянхи куна та ачан кĕнекесĕр шкула çӳремелле пулнă пулĕччĕ.

Кунта çакна калас килет. 1971-мĕш çулхи çĕнĕ вĕренӳ çулне учебниксемпе тивĕçтерес енĕпе Красноармейски райповĕ çаврăнуçусăр ĕçлени сисĕнет. Çук тенипе çамрăк ăрăва пулас коммунизм строительне кĕнекесĕр вĕрентме май çук пулĕ. Çак ыйтăва районти çутĕç пайĕпе райпо руководителĕсен хăвăртрах татса парас пулать.

Сидор Иванов, Красноармейски районĕ,
Çĕньял-Чуракасси ялĕ

## ПИЛЛĔКМĔШ ПРАКТИКА ЗАНЯТИЙĔ

1. *Шухăш тĕрĕслĕхне тупăр.*

Тĕпчевçĕ кунта чăваш просветителĕн И.Я. Яковлевăн литературăпа публицистикăри ĕçне-хĕлне пăхса тухнă. Токарь станокĕн шавĕпе йывăçран тĕрлĕ япаласем ăсталаççĕ. 1941-мĕш çулта Сăрьелĕнчи 7 çул вĕренмелли шкула пĕтерсен Етĕрнери педагогика техникумне вĕренме кĕнĕ. Университетра çиччĕмĕш класра вĕренетĕп, общежити çуртĕнче пурăнатăп. Иксĕре пĕрле лайăх, анчах та ... пĕр-пĕринсĕр те аван, аптрасах каймасть. Ăна савни теме кăмăллă, çапах тантăшĕ сана пур пĕр çывăхрах. Çарран çӳрени сывлăхшăн усăллă теççĕ, ирпе урари пушмакпах вăранса каятăп та пуç ыратать.

2. *Вырăнти калаçу чĕлхинчи сăмахсене хăвармалла-и е çук-и?*

Апай апата кĕме чĕнчĕ. Акка сăмса тутри парнелерĕ.

Кунтах ăна тăванла çăвара пытарнă. Укçа пуçтарса масар карти тытма тивĕ-ши?

Кинемипе мучи автобуспа тĕп хулана каяççĕ. Паян, çак вăхăтра, ак хасăр ларасчĕ манăн аттепе.

Районти выльăх çăвисем мĕнле шайра пулнине тĕплĕн татса калаканĕсем – выльăх-чĕрлĕх тухтăрĕсем. Ăнсăртран урисене тăсса хунă ĕнене е пăрăва, сурăха е сысна çурине масара вăрттăн кайса чикесси пирки ан та шутла: кĕтӳ йышне шута илесси пур çĕрте те тивĕçлĕ шайра.

Ферма картишĕнче мăкăр мĕкĕрет. Мана телей хăнча хăçта тупĕ-ши?

3. *Тăрăхлавлă хушма ятсемпе хушаматсен пулăвĕ пирки массăллă информацин пĕр-пĕр хатĕрĕ валли материал янтăласа парăрччĕ.Çак темăпа çырнă материалсен пухăмне хаçат валли туса парăр.*

Ăс парать (тĕслĕх вырăнне)

Путене Ваççи паян ĕçе 8 минут юлса килчĕ. Çакна Кăлпаскина та асăрхама ĕлкĕрнĕ иккен.

Ĕç-пуç çинчен малалла каласа кайиччен сире хамăр пайра ĕçлекенсемпе паллаштарасшăн. Путене Ваççи пирĕн хуçалăх ĕçĕсене туса пырать, кĕскен каласан – сахвус вăл. Людмила Васильевна Кăлпаскина вара – социаллă хӳтлĕх пайĕн пуçлăхĕ.

Кăлпаскина тӳрех пуху пирки сăмах пуçарчĕ, тепĕр сехетрен шăкăрин хăй пӳлĕмне пухăнма хушрĕ...

Палăртнă вăхăт çитсен хайхи сывлăх сунса та тăмарĕ, тӳрех тулхăрса ăс вĕрентме тапратрĕ:

– Ĕçе юлса çитесси, киле иртерех тухса шăвăнасси сирĕн йăлана кĕчĕ ĕнтĕ, – терĕ вăл. – Путене Ваççи вара паян çывăрса юлнă пулас, аран-аран сулланса çитрĕ. Автан Лисукĕ ĕнер 3 минут çурă маларах тухса вĕçтернĕ – хам курман, анчах шанчăклă çынсем систерчĕç.

Пухура Лаптак Ваççана та, Капан Петĕрне те сăмах тиврĕ – вĕсем ĕç вăхăтĕнче хăти-тăхлачипе калаçса ларнă имĕш. Людмила Васильевна ытти кăлтăкпа çылăха та асăрханă. Тен, вĕсем çинчен те калаçнă пулĕччĕ, анчах...

Анчах унăн кĕсье телефонĕ янăраса кайрĕ. Людмила Васильевна сăнĕ епле çуталса кайнине курасчĕ сирĕн! Тин кăна тухатмăш карчăк пек вĕчĕрхенсе, тарăхса ларатчĕ. Халĕ акă пирĕнти тейĕн – чĕвĕл-чĕвĕл чĕкеç пек калаçма пуçларĕ!

– Паянлăха çитĕ-ха, – терĕ Кăлпаскина. – Халĕ ман питĕ васкавлă ĕçпе кантура вĕçтермелле.

Кайран çакă паллă пулчĕ: аслă хĕрĕ пасарта питĕ илемлĕ кĕрĕк тупнă-мĕн, анчах тӳлеме укçи çитеймен. Шăп çавăнта васканă та иккен пирĕн Кăлпаскина. Ĕç вăхăтĕнчех.

Степанов Г. /Хыпар. – 2007. – Нарăсăн 1-мĕшĕ.

*1. Геннадий Кузнецов журналист «Анна аппа» очеркра чӗлхене вӑйлатмалли хӑш меслетсемпе усӑ курнине палӑртӑр.*

Анна аппа вӑл – Анна Никифоровна Начарова, ӗлӗк-авал Чакка ҫӳренӗ чӑтлӑх вӑрман варрине килсе ларнӑ Шуркасси ялӗнче 75 ҫул каялла кун ҫути курнӑ хӗрарӑм. Тӑван кӗтесрен, ял ҫуммипех юхса иртекен шӑнкӑр-шӑнкӑр шывлӑ Вӗлтӗренпе Йӗкӗс шывӗсенчен уйрӑлса урӑх ҫӗре ҫул тытнӑранпа самаях вӑхӑт иртрӗ ӗнтӗ. Унпа пӗр ӳсӗмри ҫынсем те Шуркассинче юлманпа пӗрех. Паянхи яш-кӗрӗм пачах палламасть ӑна.

«Хыпарта» ҫырса кӑтартмалӑх мӗнпе тӗлӗнтернӗ вара вӑл? Ҫапла ыйтма пултарӗ вулакан тусӑм. Ӗҫчен те сӑпайлӑ, юратӑва упрама пӗлекен чӑваш хӗрарӑмӗн тасалӑхне пӗтӗмлетекен сӑнар вӑл маншӑн. Шел, кун-ҫулӗ ытла та кӑткӑс килсе тухнӑ унӑн. Хӗр пӳне кӗрсе ҫитиччен тантӑшӗсемпе «Кушлавӑш текен вун икӗ ял уйӗнче» ҫурлапа кӑчӑрт-кӑчӑрт! тутарса чӗлтӗр кӑна ӳснӗ тырра ҫемҫешке кӗлетке ыратичченех вырни те, вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи ҫулсенче арҫынсемпе танах Упакасси вӑрманӗнче кӗреш йывӑҫсене алӑ пӑчкипе касса йӑвантарни те, кайран, ялтан тухса кайса, Йӗпреҫ-Улатӑр чукун ҫул ҫинче тар кӑларса ӗҫлени те – пурте, пурте «ҫырӑнса» юлнӑ Анна аппан чун-чӗринче. Хӑй вӑхӑтӗнче вӑр-вар та йӑрӑ, хаваслӑ та шӳте кӑмӑллакан хӗр пулнӑ. Пурнӑҫ ҫулӗ тӑрӑх юнашар утма суйласа илнӗ мӑшӑрӗ Турӑ пиллениех пулнӑшӑн мӗн тери савӑнман-ши вӑл? Анчах та кун-ҫул кустӑрми пӗр тикӗс чупмасть ҫав, чипер кусса пынӑ хушӑрах е ҫул айккинелле сикет, е тӗнӗлтен тухса ӳкет. Юратупа киленсе пурӑнаймасть ҫамрӑк мӑшӑр. Анна аппа упӑшкасӑр тӑрса юлать – вӑрманта ӗҫленӗ хушӑра йывӑҫ ҫапнипе куҫне ӗмӗрлӗхех хупнӑ. Элекҫи хӑйӗн пӗртен-пӗр «тӗпренчӗкне» те чӗр куҫҫи ҫине лартса чунӗ хӗпӗртиччен утьӑкка сиктерейместь. Ачипе кӑна тӑрса юлнӑ хитре хӗрарӑма куҫлакан пулман мар таврара. Анчах Анна аппа вӗсене пӗчӗк кил-ҫурчӗн алӑк уратинчен те иртгермест. Пӗрремӗш тата юлашки юратӑвӗпе ҫеҫ йӑпанса пурӑнать вӑл, хӑй ҫине арман чулӗ пек йӑтӑнса аннӑ хуйха-суйха чукун ҫул ҫыннисемпе пӗрле пайлать.

Инкек пĕччен çÿремест, теççĕ. Тĕрĕсех иккен – Анна аппан пĕртен-пĕр ывăлĕ Володя ар шутне кĕрсе пынă вахăтра тепĕр хурлăх килсе çапать. Улатăрти чукун çул транспорчĕн техникумĕнче вĕренекен ывăлне канмалли кунсенчен пĕринче кĕтсе илеймест амăшĕ. Пĕр кун иртет, иккĕ, виççĕ, эрне çитет. Володя пирки нимĕнле сас-хура та çук. Анна аппа техникума çитет, ывăлĕн шăпипе кăсăкланать. Ах, мĕнле тÿсрĕ-ши амăшĕн чĕри ывăлĕ тĕлсĕр-йĕрсĕр çухалнă хыççăн. Икĕ эрне иртсен унăн ÿтне Кире çывăхĕнчи вăрманта тупса таврăнсан çакă паллă пулнă: вун çиччĕри студента такамсем хула çум пуйăсĕ çинчен кăларса ывăтнă-мĕн. Камсем тунă çак хура ĕçе? Ку ыйту хуравĕ паян кунччченех уçăмлă мар.

Тĕппипех улшăннă çакăн хыççăн Анна аппа: пăрчăкан пек йăрă утти те, йăлтăр кулăллă сăн-пичĕ те, уççăн илтĕнсе тăнă илĕртÿллĕ сасси те самантрах «çухалнă». Кунтан та хăрушăраххи вара – хĕрарăмăн ăс-тăнĕпе кăмăл-туйăмĕ пăтранма тытăнни. Хĕвеле хура пĕлĕтсем хупласа илнĕ пекех, хушăран Анна аппа та çавăн пек лару-тăрăва лексе тĕлкĕшÿллĕ шухăшсен серепинчен хăтăлаймасть. Кăшт вăхăтран тÿпере каллех хĕрÿ хĕвел йăлтăр шевлисемпе выляма пуçлать пулсан, пурнăç малтан та малалла кайса пынă май, çак хĕрарăмăн хуйхă-суйхăллă чĕри пушшех те асаплăн сурма тытăнать. Чăн та, ăс-тăнран пĕтĕмпех хавшанă çын теме çук ăна, анчах та унăн пăтăрмах-мыскарисене те лăпкă чун-чĕрепе йышăнас килмест пĕрре те. Темиçе çул каялла килне-çуртне сутрĕ Анна аппа. Халĕ вăл Йĕпреç поселокĕнче ăçта килнĕ унта çÿрет: паян пĕр çĕрте, ыран тепĕр çĕрте çĕр каçать. Мĕнпе тăранса пурăнать-ши хăй? Хĕллехи шатăр сивĕ кунсенче кам хÿтлĕх панă-ши ăна?

Саккăрмĕш теçеткере пыракан хĕрарăм çуллахи кунсенче шалти ĕçсен пайĕн çурчĕ умĕнче вырăн тупнине, чукун çул хĕррипе тăсăлакан хурăнлăхра кăвайт чĕртсе чей вĕретнине хам та пĕрре кăна мар курнă. Унпа темиçе хутчен те калаçу пуçарма тăнă эпĕ. Анчах та хăй мĕншĕн ваттисен çуртне е психоневрологи интернатне кайма килĕшменни çинчен сăмах тапратсанах темĕскер тултарнă миххине çурăм хыçне çавăрса хурать те санран аяккарах пăрăнма васкать. Район пуçлăхĕсем те ăна лăпкă та хăтлă ватлăх туса парас тесе тăрăшман мар. «Ваттисен çуртне вырнаçтарнăччĕ. Пĕр эрне иртрĕ-и, иртмерĕ-и, тухса тарнă унтан

Анна аппа. «Эпĕ читлĕхе хупнă кайăкла пурăнаймастăп. Мана ирĕклĕх кирлĕ», - терĕ вăл çакăн сăлтавне ăнлантарса панă май», - çапла пĕлтерчĕ район пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ В.Л. Михалик.

Йĕпреçри ыркăмăллăх фондне хăйĕн тивĕçлĕ тÿпине хывакан В.К. Гордеев пенсионер та Вячеслав Людвиковичпа пĕр шутлах иккен. Вăл каласа пани мана уйрăмах тарăн шухăша ямарĕ-ши? Лайăх шухăшласа пăхсан эпĕ çак ыйтăва çĕклени вырăнлă пулнине туйса илĕ вулакан. «Пĕррехинче, ирпе ирех Йĕпреç поселокĕнчи тĕп стадиона çитсе килес терĕм, - пуçларĕ хăйĕн калаçăвне Василий Константинович. – Спортсменсем хывăнакан вырăнта Ева тумĕпе ларакан хĕрарăма асăрхасан тăпах чарăнса тăтăм. Ăна палласа илнĕ хыççăн ун çывăхне пырса тăма ăçтан хăюлăх çитертĕм-ши? Пĕрремĕш сăмахсенченех вăл хăй патне ирĕксĕртенех туртакан, хурлăхлă та асаплă туйăмсене ăшра тытакан, пурнăçра пĕр хăй кăна кĕтнĕ килĕшÿллĕ те тивĕçÿллĕ самантсене кĕтсе илеймесĕр асапланакан хĕрарăм пулнине туйса илтĕм эпĕ. «Манăн пичче ваттисен çуртĕнче пуçлăхра ĕçлет тесессĕн Анна аппа ман çине ыйтуллă куçĕсемпе пăхса илчĕ те, акă мĕнлерех çавăрттарса хучĕ: «Çын хÿтлĕхĕнче ырлăх-çăтмах курса киленме хăнăхман эпĕ. Ваттисен çуртĕнче нумай вырăн пур тăк, хăвăн тăванусене вырнаçтар унта».

Çÿрет вара мĕн паян кунччен çурăмĕ хыçне ытлашши йывăрах мар михĕ çакса янă ватă хĕрарăм Йĕпреç поселокĕ тăрăх. Чиркÿ умĕнчи «христаради» ыйтса аллисене тăсса тăракансен хушшинче те курма çук ăна. Ресторанра, столовăйсенче, общество апатланăвĕн ытти предприятийĕнче те илтĕнмест унăн сасси. Пĕлекенсем каланă тăрăх, аллине черкке тытасси нихăçан та йăлара пулман унăн. Çак хĕрарăм çăварĕнчен ункăн-ункăн тĕтĕм тухнине те ас тумаççĕ ăна паллакансем. Çавах та тепĕр чухне ирĕклĕхе кăмăллакан Анна аппа сăн-пичĕ кăвак тĕспе «илемленнине» курма хăнăхнă эпир. Мĕншĕн тетĕр-и? Юлашки çулсенче вăл Библипе пĕрлех тĕрлĕ çĕршыври политологсен кĕнекисене те «шĕкĕлчени» лаллă пулчĕ пире. Ăс-тăн арпашăвĕ чи çÿллĕ шая çĕкленсе çитнĕ тапхăрта Анна аппа «оратора» тухать: ĕç хыççăн çынсем йышлăн утса иртекен тĕп урамра унăн сасси çеç илтĕнсе тăрать çавăн чухне. Ăна палламаннисене, уйрăмах урăх çĕртен пирĕн тăрăха килекен çамрăксене килĕшмест Раççей Конституцине пăхăнмасăр калаçакан çыннăн

сăмахĕсем. Чĕлхене ирĕке янăшăн лекет те ăна тепĕр чухне ăнсăртран тĕл пулнă çынсен çупкăвĕ.

Хĕлле те, çулла та, çулталăкăн кирек хăш тапхăрĕнче те Анна аппа çурăмĕ хыçĕнче михĕ çакăнса пыни çинчен асăнтăм эпĕ маларах. Ăна вăл хăйĕнчен пĕр самантлăха та хăвармасть. Мĕн упрама пултарать унта? Çак ыйту çине хурав тупас тĕллевпе эпĕ темиçе çынпа та калаçу хускатса пăхрăм, анчах тупсăмне уçса параймарăм. Тавах Шуркасси ялĕнче пурăнакан Василий Николаевич Сорокина. «Анна аппа вăхăтсăр вилнĕ ывăлĕн çи-пуçне йăтса çӳрет çав михĕре. Ун çинче выртса çывăрать, тĕлĕксенче ачипе тĕл пулса калаçать. Вăл ку тарана çитсе те Володя вилнине ĕненмест. Ывăлĕпе пĕрле пулнине туйса тăни ăна пурнăçра йывăрлăхсене çĕнтерсе пыма хăват-тӳсĕм парать те», – терĕ Василий Николаевич.

Çакăн хыççăн мĕнле хакламалла-ши сана, манра та, вулакансен ăш-туйăмĕнче те иккĕлле шухăш çуратакан Анна аппа? (Хыпар. – 2006. – Çăвăн 26-мĕшĕ).

*2. Пĕтĕмĕшле правилăсем тăрăх. Мĕн килĕшмест сире çак предложенисенче? Сăмахсем тивĕçлĕ вырăнта-ши?*

Аса илтĕм: эпĕ «Рассвет» колхозăн комсомол секретарĕнче ĕçленĕ вăхăтра (1959-1960 çулсенче) 15 çулти çак ача конюхра ĕçлетчĕ. (Хыпар. – 2007. –Кăрлачăн 18-мĕшĕ).

Акă, темиçе çул каялла В. Воронцов тата икĕ Николай (Васильевичпа Алексеевич) пуçарăвĕпе Пăла ейĕве тухса сиенлекен вырăна кӳлĕ чавтарнă та икĕ енне те йывăçсем лартса чĕртнĕ. Çавăнтан вара колхоз Акатуйне çавăнта ирттерессĕ (Çавăнтах).

Çук, эпир тӳр пилĕклĕ перчеткепе çӳрекен хĕрсем мар, эпир пĕр ĕçрен те хăрамастпăр. Улăма пăспа çемçетмелли заводра хатĕрленĕ бак пур.

Ăна Çемен Элкер премине «Советская Чувашия» хаçат страницисенче ял хуçалăх проблемисене çутатса панăшăн pană.

## ÇИЧЧĔМĔШ ПРАКТИКА ЗАНЯТИЙĔ

*1. Публицистика чĕлхине вăйлатмалли меслетĕн ятне шыраса тупăр. Вырăсла куçарăр.*

Утияла хăй çине ан турттăр.
Шикленекен кĕрĕк пĕркеннĕ.
Упранакана турă упрать теççĕ.
Пуртă авринчен шĕшлĕ аври туса хурасшăн.
Тӳпе хуçи тăр-тăр тăри.
Сывлать вăрман çеç хаш! та хаш!
Шевле сапать тин килнĕ шуçăм.
«Турри çапла çырнă», – тесе шухăшлатăн-ши?

Шăнкăр-шăнкăр шыв юхать
Аслă ялăн çумĕпе.
Хĕвел тĕрĕ тĕрлесе
Вылять унăн шывĕпе.

Ялта «хĕрлĕ автан» алхасма пикеннĕ.
Хĕвел ури кантăкран кĕчĕ.
Кĕрĕклĕ янавар.
Кукăр алăллă çын.

Çĕвĕç йĕппе тăранать.
Кашкăра ури тăрантарать.
Пĕсехисене хĕретнĕ.
Сӳсленсех çитнĕ.
Чĕлхе хыçса лараççĕ.

Çапла майпа пире куç кĕрет улталаççĕ, çаратаççĕ,
чике тăршшĕ лартаççĕ.
«Кай, камсем пурăнаççĕ-ши кунта? – тесе пĕççӳне
çапсах тĕлĕнĕн эсĕ.

«Ăçта шыв, çавăнта шапа».
«Çыннисем мĕнле, ялĕсем – çапла».
Вилĕм çулсăрах çӳрет.

Кама куран – çавна хыван.
Çĕтнĕ пуртăн авăрне шырама хушманнине асра тытасчĕ.
Юратнă çынпа хӳшĕре те çăтмах теççĕ.
Вĕлтрен кайăкĕ.
Автансăр чăх.
Тутуна ан мăкăрт-ха.
Тутуна ан тăс.
Сăмсуна ан каçăрт.
Пуçна ан пĕк.
Куршанак çыпăçнă.
Çулăр такăр пултăр.
Вăй патăр.
Алли çăмăл.
Сехре хăппи.
Пăлахая пер.
Шалçи тулĕ. Çичĕ ют.
Çиччĕ виç те пĕрре кас.
Куç хывнă.
Пуç ватса тăман.
Çанă тавăрса вĕренме пуçларăмăр.
Суккăр автанла тӳпелешеççĕ.
Ĕçрен куç хăрать те, алă тăвать.
Ĕç хыççăн хура çăкăр та тутлă.
Халăх вĕрсен, капан тӳнет.
Ĕç лайăхланни чĕвен тăрса пăхсан та курăнмасть.
Куç шăрçи пек сыхла.
Çын ĕçпе мар, ĕçкĕпе хуçăлать.
Çуралнă чун чул хушшинче те ӳсет.
«Кун хыççăнах пăшăл пăтти пĕçерекенсен йыши хунаса кайрĕ».
Шухăшĕ çурхи шыв пек вылять.
Шăл шаккаса лар.
Алла çăкăр тытса.
Тĕнче хĕсĕр мар.

*1. Сăмаха кăткăсламасăрах юрамĕ-ши? Илсе кăтартнă сăмах çаврăнăшĕсем пичете юравлă-ши?*

Шырав çулĕпелен пыр. Унашкал кăсăклă ĕçсем кăçал та пулĕç. Леонардо да Винчи пурнăçĕнчи кăсăклă темиçе пулăмсене кăтартăр. Уяв вăхăтĕнче культурăпа спорт мероприятийĕсем те кăсăклă иртнĕ.

Ку та пысăк пĕлтерĕшлĕ, ун пирки те шутласчĕ. Уйăх хушши ĕçлемесĕр пурăнтăм. Ку та пирĕн истори.

Васька йăйăр тем йывăрăш та туртать. чупура пурпĕр Орликран юлса пырать. Президент хастар пулсан йĕкĕрешсем те çуралаççĕ. Вăрçă пуçланнă çул фронта тухса кайнă.

Лицензисĕр тĕк – штраф (Хаçатри материал тарăх).

*2. Урăх чĕлхе сăмахĕсенчен хăтăлма пулать-и е çук-и?*

Лаборатори заведующине хисеплĕ ят панă. Пĕр черкке чай мăкăрлантармалла мар-ши? Унăн ĕçне патшалăх влаç органĕн представителĕсем хутшăнчĕç. Ăна çулталăк çурăлăха водитель удостоверенисĕр хăварнă. Суя водитель удостоверенийĕпе усă курнăшăн айăпланă. Чĕре мышцине еплерех çирĕплетмелле? Юрать-ха, çул çӳрев хăрушсăрлăхĕн патшалăх инспекцийĕн сотрудникĕсем тимлĕ пулнă.

«ВолгаТелеком» АОУн республикăри филиалĕ пĕлтернĕ тăрăх, проводлă хыпарлава аталантармалли программăпа килĕшӳллĕн 2004 çултанпа абонементсене эфир программисене йышăнмалли йĕрке çине куçарас ĕç пырать. Халăх провод хыпарлавĕпе сахалрах усă курнă май радиотрансляци точкисен шучĕ те чакать. Çав шутра – Пăрачкав тата Вăрнар районĕсенче те. Абонентсен шучĕ тăруках чакнине пула Пăрачкаври, Вăрнарти, Калининăри радиотрансляци узелĕсене ĕçлеттерме пăрахнă.

Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче Гитлер захватчикĕсене хирĕç Н.И. Игнатьев комсомолец хастаррăн çапăçнă. Çакна асра тытса, унăн тава тивĕçлĕ ĕçĕсене анлăрах пропагандăлас тĕллевпе Чăваш Енре çĕнĕрен мерăсем йышăнасса питĕ шанас килет.

## САККĂРМĔШ ПРАКТИКА ЗАНЯТИЙĔ

*1. Студентсен доклачĕсем («Пичет, радиохыпарлав тата телекурав материалĕсене редакцилессин тĕп йĕркисем тата меслечĕсем», «Редакцилессин логика тĕлĕшĕнчи никĕсĕсем» тата «Автор материалĕн композицийĕ енĕпе ĕçлесси»).*

*2. Вĕренӳ программинчи пĕтĕмĕшле правилăсене аса илсе редакцилемелли текст.*

Енчен халĕ сире отрядсенче каллех командир пулса ертсе пыма лекнĕ пулсан, ĕçе мĕнле пуçăннă пулăттăр? Аванах Штанашри вăтам шкултан вĕренсе тухать. Акă, кĕрхи тулă пуссинче çумкурăксем тырăран нумайрах. Апай мана вăрçмарĕ. Йĕркеллĕ çемьере ӳснĕ хĕр ача медицина училищинчен вĕренсе тухса тухтăр пулса тăнă. Канаш районĕнчи Киров ячĕпе хисепленсе тăракан ял хуçалăх кооперативĕнче артистсем концерт лартса пачĕç. Автор статьяра строительсен малаллахи ĕçĕсем çинчен палăртса хурать.

Кооперативăн Патаккасси ферминче ĕçлекенсем правительство пуçлăхне тулли кăмăлпа кĕтсе илчĕç, хăйсен ĕçĕ çинчен пăшăрханса каласа пачĕç, ĕç укçи шайĕ пĕчĕкрен пăшăрханчĕç. Çуллă çирĕм те ăш йăпатма вĕри чайне ĕçем-ха пĕр чăмăр. Хам асаннене эпĕ аллăмĕш çулсенчех сăваплисен шутне кĕртсе хамăн пĕр кĕнекере çырса кăтартнăччĕ. И.Я. Яковлев пĕлет, ку поэма – çыруллă чăваш илемлĕ литературин чăн-чăн никĕсне хуракан япала. Хушамачĕ унăн Деменков ятлă.

## ТĂХХĂРМĔШ ПРАКТИКА ЗАНЯТИЙĔ

*1. Текста пичете хатĕрлĕр. Ятне хăвăр тупăрччĕ. (Аудиторире пурнăçламалли ĕç).*

«Кĕнеке – çыннăн чи çывăх та шанчăклă тусĕ», - тесе каламаççĕ-и-ха? Çакна сиссех пулĕ грексен поэчĕ Каллимах пирĕн эрăчченхи 310-238 çулсенче пурăннăскер, Александрийски библиотекинче 120 кĕнекерен пĕрремĕш каталог хатĕрленĕ. Ун чухнех кĕнеке – чи ăслă вĕрентекен пулнине пĕлнĕ ĕнтĕ.

1917 çул хыççăн хура халăха çутта кăларас ĕç аталанать. Çак «хум» Çĕнĕ Пăва ялне 1928 çулта пырса тивет. Çавна пула Л. Ласточкин купца çуртĕнче вулавăш пӳрчĕ маттур комсомолка

Минадора Пугачева ертсе пынипе хӑйӗн ӗҫне пуҫлать. Аслӑ Таябара ҫуралса ӳснӗскер ырми-канми тӑрӑшнӑ. Каҫсерен ҫамрӑксем ҫеҫ мар, ватти-вӗтти те пуҫтарӑнса хаҫат-журнал вуланӑ, кирлӗ ыйтусене сӳтсе явнӑ. Хальхилле каласан библиотекӑна малалла аталантарас тесе кашниех мӗн пур кӗнекисене илсе килнӗ. Ҫак ҫулах ялта сассӑр пӗрремӗш кинофильм кӑтартаҫҫӗ. Ятарлӑ ҫурт пулман пирки ял халӑхне киномеханик Прокопий Лаптев ҫу кунӗсенче урамра кинофильм кӑтартса савӑнтарма пултарнӑ. 1965 ҫулта 50 ҫын вырнаҫакан библиотекӑллӑ клуб туса хураҫҫӗ. Вулавӑш ҫуртне ертсе пыма Луиза Витальевна Викторовӑна шанса параҫҫӗ.

Ҫултан-ҫул библиотекӑра ҫӗнӗ кӗнекесемпе пуянланса пынӑ, тӗрлӗрен мероприятисем ирттернӗ.

1967 ҫулта Луиза Витальевна культурӑна аталантарас ӗҫпе лайӑх ӗҫленӗшӗн Хисеп грамотипе чысланӑ. 1977-1978 ҫулсенче библиотека «Республикӑри чи лайӑх библиотека» ята тивӗҫ пулать. 1969 ҫултанпа культура кермене 250 вырӑнлӑ пулса тӑрать.

Л.В. Викторова 38 ҫул хушши библиотекӑра ырми-канми вӑй хунӑ хыҫҫӑн, хӑйпе пӗрле ӗҫленӗ Зоя Николаевна Шумилкинана хӑй вырӑнне хӑварать. Паянхи кун кӗнекесен шучӗ 8 пин ытла экземпляр, вӗсенчен 2600 кӑларӑм чӑвашла. Хальхи библиотека ҫурчӗ пысӑк та ҫутӑ. Ҫын татӑлма пӗлмест пулин те кашниех ыттисене чӑрмантарас  мар тесе чӗрне вӗҫҫӗн ҫӳреме тӑрӑшать. Зоя Николаевна «кӗнеке патшалӑхӗн асамҫи» тейӗн, мӗн ыйтнине хӑвӑрт тупса пама пултарать. Хӑйӗн ӑшӑ куллипе, ӑслӑ та ырӑ канашӗпе вулакана пур енчен те тивӗҫтерет. Библиотекӑна кӗнеке вулама тӑватӑ ҫулхи ачаран пуҫласа вӑрҫӑ ветеранӗсем таранччен ҫӳреҫҫӗ (вӗсен хушшинче С.В. Смолина, З.П. Николаева).

Зоя Николаевна ҫӗнӗ кӗнекесен выставкине йӗркелет. «Ҫут ҫанталӑк савӑнӑҫӗ», «Аслӑ ҫӗнтерӳ 1941-1945», «Чӑваш халӑх историйӗ», «Юбилярсем», «Асамлӑх тӗнчинче» … стендсем библиотекӑна тата та пуянлатаҫҫӗ, вулакана хӑй патне туртаҫҫӗ.

Ҫӗнӗ Пӑвари культура кермене те библиотекӑпах пӗр кунта уҫӑлнӑ. Паянхи кун ӑна Надежда Елизаровна Семенова ертсе пырать. 20 ҫул ӗнтӗ Л.П. Волкова кунта техничкӑра ӗҫленӗ.

З.Н. Шумилкинапа Н.Е. Семенова тачӑ ҫыхӑнса ӗҫлеҫҫӗ, тӗрлӗ мероприятисене, уявсене пӗр-пӗринпе канашласа йӗрке-

леççĕ.Тепĕр чухне шкул та вĕсем патне хутшăнать. Кашни çулах ирттерекен Питрав уявĕсенче ял кĕрлесе тăрать, районти ярмаркасенчен пĕртте кая мар. Кермен пек культура çуртĕнче арçынсем, хĕрарăмсем валли ирттерекен уявсем мĕне тăраççĕ тата! Кашни кунах çамрăксем ташă каçĕсем ирттереççĕ.

Елчĕк тăрăхĕнче талантлă çынсем нумаййине пурте пĕлеççĕ ĕнтĕ. Света Александрова шăпчăк пек илемлĕ юрлама пĕлнинчен тĕлĕнеççĕ. Галина Петрова ертсе пыракан «Шанчăк» фольклор ушкăнĕн юррисене итлеме кăмăллаççĕ. Н. Ертмаковпа Ю. Пузанков баянистсем Шупашкарти артистсенчен пĕртте кая мар.

Культура çуртне малалла аталантарас тĕлĕшпе сахал мар тăрăшнă Ю. Титовпа А. Ласточкинăн – спонсорсен, тÿписем пысăк теес килет. Вĕсем тĕрлĕ аппаратура, краскăсем илме укçатенкĕ уйăраççĕ.

– Çамрăксем пушă вăхăчĕсене усăллă, кирлĕ пек ирттерччĕр тесе тăрăшатпăр-çке, – терĕç мана Н.Е. Семеновăпа З.Н. Шумилкина алăкран ăсатса янă май.

Т. Краснова

*2. Хутшăнчĕ тата хушăнчĕ сăмахсемпе тĕрĕс усă курăр.*

Венгрин тĕп хулине ирĕке кăларнă хыççăн манăн кăкăрăм çинче «Будапешта илнĕшĕн» медаль хутшăнчĕ.

Йыша хутшăнтарма малтан полк иккĕмĕш эшелонта тăчĕ.

Тепĕр çул иккĕмĕш потокра кăткăс операци хутшăнмалла! Хĕрарăмсем валли хром атăсем çĕлесси.

Çакна пулах вăл каçхи концерта хутшăнаймасан та пултарнă.

Халĕ унăн тата тепĕр хĕр те, икĕ мăнук та хутшăнчĕç.

Тимĕр вăййине кăмăллакан вун-вун çамрăкпа ветеран хутшăнчĕç унта.

## Харпăр хăй тĕллĕн пурнăçламалли хăнăхтарусем

*1. Сăмахсем хăйсен вырăнĕнчех-ши?*

Кăçалхи унăн хăнисен йышĕ те сумлă. Раççейрен туслăха çирĕплетекен, ĕçлĕ çыхăнусем йĕркелеме май паракан чăннипех пысăк курава Калуга, Киров, Мускав, Чулхула облаçĕсенчи … тавар кăларакансем хутшăнаççĕ. Преступлени пулнă вырăнта çав вăхăтра резерври ятарлă взвод сотрудникĕсем Владислав Иванов милици сержанчĕпе Артур Вязов прапорщик патрульте çӳренĕ. Çамрăк йĕрке хуралçисемпе «кушакпа шăшилле» выляс темен, хăйĕн айăпне йышăннă.

Иванов арăмĕпе уйрăлнă. Çамрăк çара кайиччен больницăра сипленнĕ. Çирĕп алă хĕре хул пуççинчен чăмăртарĕ, ун куçĕнчен пăхрĕ, вара çаврăнса уттарчĕ. Упăшкапа уйрăлни тĕнче пĕтсе килнине пĕлтермест. Крайри больницăра халĕ амăшĕ Катя умĕнчех ларать. Çав вăхăтра Америкăра Аляскăра тупнă ылтăн сакпасĕсем çинчен сас-хура сарăлнă. Ашĕсене пĕр хуран çинче, пăттине тепĕр хуран çинче пĕçереççĕ. Эпĕ гипертонипе чирлĕ пирки яланах эмел ĕçсе тăратăп. Хул пуççи урлă çакнă çăкăр татăккисем хунă хутаç енчен-еннелле сулланса пырать.

*2. Сасăпа каласа, сăмах вĕççĕн редакцилемелли предложенисем.*

16 çул хушши кĕтӳçĕ пулса ĕçлет С. Никифоров. Редакцинче ĕçлекен хаклă юлташсене чи малтанах эпĕ сире çирĕп сывлăх сĕнесшĕн, ĕçре тата вĕренӳре ăнăçу сунатăп. Эпĕ шкулта староста пулса ĕçлетĕп.

Пĕрремĕш комбайн пирĕн колхоза 1951 çулсенче илсе килнĕ. Вăл комбайн çинче Петров Геннадий ĕçленĕ. Халăх ун чух пур тырра та аласемпе вырнă ĕнтĕ. Халĕ пирĕн колхоз ура çине çĕкленчĕ ĕнтĕ. Ку ĕнтĕ çĕр ĕçлекенсене, уйрăмах механизаторсене, ака вăхăтĕнчи вăхăтпа туллин усă курма, ĕçре кашни сехете, минута хаклама хистет.

Пĕр каçхине, кăнтăрла иртсен, урамра нимĕç салтакĕсем кăшкăрашни илтĕнсе кайнă. Степан вăрçă хирĕнчен аманса

килнĕ, хăрах ури унăн хуçланман. Çавăнпа чăлахскере урăх вăрçа илмен.

Информаци ушкăнĕн членĕсем патне ыйтусем нумай пулчĕç.

Шултра мăйракаллă выльăхсен ферминчи ĕç ăнăçлăхĕ осеменатор-техниксен ĕçĕнчен нумай килет.

## Запаслăх занятисен планĕсем

*1. Çак корреспонденцие пичете яма хатĕрлесе парăр. Ятне хăвăр тупăр.*

Хула урамĕнче инçех те мар вырнаçнă атă-пушмак фабрики. Пĕлтĕр ăна тĕпрен юсаса ĕçе ячĕç. Халĕ вара таса та çутă цехсене кĕрсен чун савăнать. Кунта кăррипе çĕнĕ станоксем, вĕсен пĕр тикĕс сасси темĕнле кĕвве аса илтерет…

Фабрика икĕ потокпа ĕçлет, çĕнĕрен юсиччен кунта ĕçе ун пек пайлани пулман. Ку ĕçе йĕркелеме те, ун хавăртлăхне ӳстерме те чылай пулăшрĕ. Пĕрремĕш потокĕнче çулталăк тăршшĕпех çуллахи пушмаксем туса кăлараççĕ. Иккĕмĕшĕнче вара, сентябрь уйăхĕнчен пуçласа, хĕрарăмсем тăхăнма ăшă атăсем кăлара пуçларĕç. Вĕсен пĕтĕм шучĕ 3-4 пине мăшăр çитмелле.

Фабрикăра халь пурĕ 170 çын ĕçлет, вĕсенчен çурри ытла çамрăксем. Чылай çул ĕçлекенсем те сахал мар кунта. Акă, сăмахран, Тамара Табаковăпа Мария Скворцова фрезеровщицăсене илер. Юратса тăваççĕ вĕсем хăйсен ĕçне, ахальтен мар кăмăллаççĕ вĕсене юлташсем.

Пĕрремĕш потокра, хатĕр продукцие йышăнакан урамра, яланах Алевтина Александровна Игнатьева мастера курма пулать. Çамрăк-ха вăл, апла пулин те пурне те курма ĕлкĕрет – мĕнле хакпа каять продукци, кăлтăксем çук-и, мĕнлерех майпа ĕç тухăçлăхне ӳстерме пулать. Çавăнпа та пуль унăн смени яланах малти ретре, йышăннă плана ирттерсе тултарать.

Фабрика коллективĕ уйăхсерен 15 пин тĕрлĕ йышши хатĕр атă-пушмак ăсатать магазинсене. Çитес çулсенче ку ĕç тата çӳлерех пусăма хăпармалла. Кун çинчен акă мĕнле каласа пачĕç Д.С. Лоханкин директорпа М. Соснов аслă инженер:

– Эпир халь ҫитес ҫул валли план хатӗрлетпӗр. Планпа пӑхнӑ тӑрӑх, ҫитес ҫул пуҫламӑшӗнчен иккӗмӗш потокра тата тепӗр кӑткӑс операци хутшӑнмалла; ку вӑл хӗрарӑмсем валли хромран тунӑ илемлӗ формӑллӑ туфлисен тата ӑшӑ атӑсен хаклӑхне ӳстересси. Тепӗр ҫул вара пӗрремӗш потокра арҫынсем валли ӑшӑ пушмаксем туса кӑларас ӗҫе пуҫарса ярасшӑн. Кусене пурнӑҫа кӗртме эпир паянах тытӑнтӑмӑр ӗнтӗ.

2. *Палӑртнӑ темӑпа публицистика произведенийӗ ҫырасси, вӗсене ушкӑнпа пӗрле тишкересси, лайӑххисене массӑллӑ информаци хатӗрӗсене сӗнесси.* (Тӗслӗхрен: «Аттесемпе аннесен паттӑрлӑхӗ» - «Отвага наших отцов и матерей», «Аҫупа аннӳне ырлӑх кӳме тӑрӑш!» - «Творите для отцов и матерей добро!».

Пиччепе (аппапа) паллаштаратӑп.

Шӑллӑмпа (йӑмӑкпа) паллаштаратӑп.

Это мои братья и сестры.

Мухтанатӑп аттепе! – Горжусь своим отцом.

Мухтанатӑп аннепе! – Горжусь своей матерью!

Пур-ши юрату? – Любовь на самом деле есть?

### Хушма занятире пурнӑҫламалли ӗҫсем

*Май пур ҫӗрте халӑх сӑмахлӑхӗпе усӑ курӑр.*

Пулкалать Карачӑмпа унашкалли

Ятлаҫмасӑр-тавлашмасӑр пӗр тикӗс пымасть пурнӑҫ тени. Ҫемьере те ҫавах.

– Кампа ӗҫсе янӑ эсӗ укҫуна? – ыйтрӗ арӑмӗ ҫине-ҫинех Карачӑмран.

Лешӗ чӗнмерӗ. Тек ӗҫместӗп ӗнтӗ, тӗвӗленчӗ шухӑш пуҫӗнче. Ҫав вӑхӑтра арӑмӗ турчӑка ярса тытрӗ. Ӗҫ кӑткӑсланасса курса, Карачӑм тухса кайма шут тытрӗ. Тӗрӗссипе каласан, укҫине кампа ӗҫсе янине Карачӑм ниепле те аса илеймерӗ.

– Кирек те вӗлерӗр, аса илейместӗп, – тет вӑл хӑйне хӑй. Юлташӗсем ӗҫнӗ те, кам ӑҫталла каять, унталла саланнӑ ӗнтӗ.

Карачăмăн пуçĕ çав тери ыратать. Вăл буфет еннелле утнă май арăмĕ хăйне ытла та хытă ятлани пирки шутласа пычĕ. Буфетра вăл икĕ черкке умлă-хыçлă ĕçрĕ. Вара чĕлхи хăй тĕллĕнех калаçакан пулса кайрĕ. Хăй хуйхине буфетчика каласа пачĕ.

– Юрать-ха хăв сывă юлнă, – терĕ лешĕ.

Çак сăмахсем Пурхилепе унăн тусĕсем патне те çитрĕç, те çитмерĕç, анчах Пурхиле ăнланчĕ: туслăха, çывăх юлташсене сĕтел хушшинче шырамалла мар.

## Туссем-ши вĕсем?
*(Тĕслĕх вырăнне)*

Кухньăра чашăк-тирĕк ванма тытăнсанах, Пурхиле мухмăр-сухмăрĕ çинчен манса кайрĕ. Вăл, пуçне утиял ăшĕнчен кăлар-масăрах, хашкаса выртрĕ. Арăмĕн хаярлăхĕ, аякран килекен çилтăвăл пек, вăйланса-вăйланса пычĕ те Пурхилен вырăнĕ патне çитсе чарăнчĕ.

– Юлашки хут ыйтатăп: кампа ĕçсе ятăн вутă укçине? – кĕç-вĕç сиксе ларакан хаяр йытă пек туллашрĕ арăмĕ.

Пурхиле çăварне шыв сыпрĕ. Ун пек чух сăмах чĕнсен усси пулас çуккине лайăх вĕренсе çитнĕскер, айăплă чĕрчун пек, куçĕсене мăчлаттарса ларчĕ. Мăнтăртарах тачка чышкăсем унăн сăмси патне çывхарсан, калаçман чĕлхе те калаçакан пулчĕ:

– Туссемпе ĕçрĕмĕр. Астумастăп: те ĕçсех янă, те кăларса илнĕ, – теме ĕлкĕрчĕ çеç, Пурхиле арăмĕ каллех сиксе ларчĕ.

– Камсем санăн тусусем? 57 тенкĕ те 86 пус таран ĕçсе яра-кансем тусусем-и вĕсем? – арăмĕн пысăк куçĕсем кĕç-вĕç сиксе тухас пек ялтăртатаççĕ, тути хĕррисем сутĕнь пек чĕтреççĕ.

Пурхиле, ĕç шала кĕрсе каяссине туйса, килĕнчен тухса шăвăнма шутларĕ. Хуйхине сирес тесе, тÿрех столовăй еннелле утрĕ. Пĕр пус юлмиччен тăратса хăварнă-çке хуть. Тен, хăрат-малла кăларса илмен-ши? – тĕлĕкре те тĕлленмен ĕнерхи ĕçкĕ пирки аса илесшĕн пулчĕ Пурхиле.

Çапса пăрахсан та астумастăп, çывăрса кайсан манса пĕтнĕ пуль-и? Килне ăна Якку кумĕ ăсатса янă. Буфет умĕнчех сĕвенсе аннă, тет. Пĕрле ĕçнисем, аяккалла сапнă пăрçа пекех, саланса пĕтнĕ-мĕн.

Çул çинче вăл арăмĕн пиччĕшне тĕл пулчĕ. Ĕнерхи çинчен шарламарĕ, япала туянмалла тесе, кивçенле 5 тенкĕ укçа илчĕ.

Пурхиле столовăйне кĕрсе кайнине ĕнерхи туссем тӳрех асăрхарĕç. Чи малтан Пурхиле аллине Лаптешкин чăмăртарĕ.

– Сывлăхсем начар. Текущий ремонт тумăпăр-и? – чĕлĕм туртса сарăхнă шăлĕсене йĕрсе пăрахрĕ Лаптешкин. – Эсĕ ĕнер самаях хĕрĕнкĕччĕ. Хам та астумастăп: темĕнле киле çитсе выртнă, – калаçăвне малалла тăсрĕ вăл.

Вĕсем патне ĕнерхи тепĕр тусĕ Гавриков пырса çыхланчĕ.

– Салам, тусăм-юсăм, сывлăху мĕнле? – Пурхиле аллине чăмăртарĕ Гавриков та. – Пуç çурăлсах тухать. Ĕнер эпир миçе кĕленчĕ пушатнă-ши? – тĕлĕнсе пăхрĕ вăл.

«Туссем умĕнче, укçа пур çинчех, мĕскĕнленсе тăни аван мар», – шутларĕ Пурхиле. – Ĕнерхи мыскарана каласа парсан та усси пулас çук. «Чуптар, ме виç тенкĕ», – терĕ Лаптешкина укçа тыттарса.

Чĕлхе-çăвар кăшт çемçелсен, Пурхиле чăтса тăраймарĕ, укçа пирки персе ячĕ, арăмĕ тип мунча кĕртни çинчен макăрас пек каласа пачĕ.

– Юрать-ха, пуçу чĕрĕ юлнă. Укçа вăл – пуç мар. Паян ĕçлен те, ыран каллех пулать, – терĕ Лаптешкин.

– Ун чухлĕ ĕçсе яманах эпир, кам та пулин кăларса илнĕ, - калаçăва хутшăнчĕ Гавриков.

– Ĕçки никама та ыр тумасть çав. Ним те мар: арăм çисех ярать. Вутă вырăнне хăвна çунтаратăп, тет, – хаш сывласа илчĕ Пурхиле. Унтан стакан тĕпĕнчине ĕçсе ячĕ, чĕлхи пушшех сӳтĕлсе кайрĕ. – Тек çăвара та сыпмастăп. Мĕн усси унтан? Ĕнер пĕр машина вутта тĕтĕмсĕрех çунтарса ятăмăр вĕт…

– Э-э-э, тусăм-юсăм, – ыталаса илчĕ Пурхилене Лаптешкин. – Халĕ кам ĕçмест: чăх та ĕçет, теççĕ.

– Эпĕ пĕлетĕп, – терĕ Гавриков. – Телефон юпи ĕçмест. Во! Мĕншĕн тесен унăн стаканĕсем кутăнла, çӳлелле лармаççĕ.

Виçĕ тус, кĕтесри сĕтеле йышăннăскерсем, малтанах çурма сасăпа, унтан хыттăнрах калаçма пуçларĕç. Лаптешкин ытларах чĕлхипе мар, аллисемпе хăлаçланчĕ. Гавриков та ун урапи çинчен ӳксе юласшăн мар: пĕрех май апат çиекенсене чăрмантарчĕ.

Пурхиле хăйĕн хуйхипех асапланса ларчĕ, килне мĕнле пырса кĕрессинчен хăраса пуçне çĕмĕрчĕ.

Шавлӑ компани пирки милици уйрӑмӗн сотрудникӗсен хӑлхине такам ҫитернӗ. Буфетра хӗрлӗ картуз курӑнсанах, Лаптешкинпа Гавриков, тула тухса кӗретпӗр тесе, столовӑйӗнчен тухса шӑвӑнчӗҫ. Пурхиле милиционер умӗнче айӑплӑ ҫын пек утса пычӗ. Алӑк умӗнче тахӑшӗ хихлетсе кулчӗ. Пурхиле ҫаврӑнчӗ те Лаптешкина курах кайрӗ. Хӑлхи патне ҫитиех сарӑлса кайнӑ тутисем, ӑна курсан, сарӑхнӑ шӑлӗсене хупларӗҫ.

– Вот тус пулать иккен, – тарӑхнипе лач сурчӗ Пурхиле.

Виҫӗ тенкӗ штраф тӳлесе тухнӑ хыҫҫӑн, Пурхиле тӳрех килӗ еннелле утрӗ. Ӑна Лаптешкинпа Гавриков хуса ҫитрӗҫ.

– Мӗн турӗҫ? – ыйтрӗ Лаптешкин.

– Унта ӗҫмелле марччӗ, хамӑр та ухмах ҫав, – йӑпӑлтатрӗ Гавриков.

– Итлӗр-ха, – терӗ Пурхиле (хальхинче вӗсене вӑл туссем темерӗ) паянтан пуҫласа пӗрле стакан тытасси юлашки хут пултӑр. Расул Гамзатов мӗн каланӑччӗ-ха?

«...Пить можно всем,
Но надо знать, когда и с кем,
За что и сколько...».

Ленин ҫулӗпе. – 1969. – Авӑн уйӑхӗн 6-мӗшӗ.

### «Тетя Маша» тӗрленчӗке чӑвашла куҫарӑрччӗ

Тетя Маша – худенькая, невысокая и уже немолодая женщина – раз в неделю приносит нам молоко. Ее деревня находится где-то под Цивильском, и ей приходится везти свой удой и на автобусе, и на троллейбусе. В рюкзаке у нее – три 3-литровые банки, да в руках, иной раз, еще две – считай, 15 литров.

Мы стоим с ней на лестничной площадке. И она, стряхнув с себя снег, достает из сумки запотевшую банку молока. – Маша, - говорю, - тяжело, наверное?

– Не так тяжело, как боязно: не побить бы банки.

Всегда приветливое выражение ее лица сегодня сменилось на озабоченное.

– Что невесела, Маша?

– Да вот приболела. Спину ломит, не разогнусь. Я здесь постою, отдохну немного.

– Я там отогреюсь, – говорит, – расслаблюсь и не поднимусь. Это вы в городе как у Христа за пазухой – все у вас под рукой. А заболели – так сразу к врачу, на больничный. А мне болеть нельзя. Утром чуть свет, болеешь, не болеешь, а скотину надо кормить. Потом на родник за водой, потом – печку топить. И так крутишься целый день.

– Маша, – говорю, у вас в деревне жизнь, конечно, трудная, но зато здоровая. А здесь, в городе, и стрессы, и экология…

– Какие  у вас стрессы? Вон у меня корова однажды занедужила – вот это стресс. Вы, городские, уж больно о здоровье своем беспокоитесь, вот и придумываете всякие оправдания своей изнеженности. Когда я была помоложе,  возила молоко одному солидному начальнику. Так его жена тоже на стрессы жаловалась, по два раза в год на курорты лечиться ездила. И все завидовала моему загару да здоровью. Как-то я сказала ей в шутку: приезжай, мол, к нам, в деревню, поработаешь в поле – тоже загорелой  будешь. Обиделась. Даже  от молока отказалась. А ты не обижаешься?

Как можно на тетю Машу обидеться? А ведь во многом она права, подумал я. Действительно, не слишком ли мы печемся о своем рыхлом изнеженном теле, доверяя его врачам и пичкая лекарствами? А делаем ли что-нибудь сами для своего здоровья?

– Ладно, – говорит тетя Маша, – заболталась я. А мне вон еще сколько разносить.

Она осторожно надевает рюкзак и, поправив на плечах лямки, спускается по ступенькам лестницы.

Б. Панфилов,
пенсионер,
Чебоксары

**Суйласа илнĕ темăпа рефератсем çырасси, докладсем хатĕрлесси, вĕсене сӳтсе явса пичете сĕнесси.**
**Çав темăна курс ĕçĕн тата вĕренсе тухаканăн квалификаци ĕçĕн никĕсне хывасси**

1. Хальхи пресса чĕлхи. Язык современной прессы.

2. Чăвашла терминсем пирки пуçа килнĕ шухăшсем. Мысли о терминах на чувашском языке.

3. Ал çырăвĕн культури пирки пирĕн мĕн пĕлмелле? Что мы должны знать о культуре рукописи?

4. Ятсемпе хушаматсен публицистикăри вырăнĕ. Употребление имен и фамилий в публицистике.

5. Тĕрĕс çырни кăна сахал, илемлĕ çыр. Пиши не только правильно, но и красиво.

6. Чăваш кĕнеке издательстви кăларнă çĕнĕ кĕнекесем. Новые книги, выпущенные Чувашским книжным издательством.

7. Кĕнеке пĕлтерĕшĕ ӳсет-и е чакать? Значение книги растет или снижается?

8. Хальхи телекурав кăларăмĕсенчен хăшĕ килĕшет, хăшĕ кăмăла хуçать? Что нравится в современных телепередачах, а что отталкивает?

9. Мĕншĕн çапла чĕнеççĕ? Откуда такое прозвище?

10. Ял халăхĕ чакса пырать-и е ӳсет? Деревня вымирает или множится?

11. Пирĕн таврари вырăнсен ячĕсем. Названия нашей местности.

12. Пурнăçран эпĕ мĕн кĕтетĕп, пурнăç вара манран? Чего я жду от жизни, а жизнь – от меня?

13. Телекурав кăларăмĕсен чĕлхин уйрăмлăхĕсем. Особенности языка телевизионных передач.

14. Радиохыпарлав чĕлхин мĕнле уйрăмлăхсем пур? Какие особенности имеет язык радиопередач?

15. Хаçат-журналта логика йăнăшĕсем каймаççĕ-и? Не допускаются ли в газетах и журналах логические ошибки?

16. Массăллă информаци хатĕрĕсене хисеп ячĕсемпе усă курасси пирки мĕнлерех сĕнӳсем паратăр? Какие советы даете

средствам массовой информации по употреблению имен числительных?

17. Лайăх журналист пулма мĕн кирлĕ? Как стать хорошим журналистом?

18. Санăн пурлăху – пултарулăх. Твое богатство – творческие способности.

19. Чи малтанах тĕрĕссине çыр, мĕн çырнине ылтăнпа та кĕмĕлпе илемлет. Прежде всего показывай только правду, а написанное украшай золотом и серебром.

20. Мĕн чĕререн тухать, çавă тепĕр чĕре патне çитетех. Что идет от сердца, до сердца и доходит.

21. Кам хавхаланса çырать, çавăн ĕçĕ ăнать. Хорошо пишет тот, кто пишет с вдохновением.

22. Кирек мĕнĕнне те вĕçне-хĕрне тупма тăрăш, çапла майпа ăна-кăна ăнкарăн (Козьма Прутков). Отыщи всему начало, и ты многое поймешь (Козьма Прутков).

23. Халăх сăмахĕ – ăс-хакăл ахахĕ. Слово народное – жемчужина разума.

24. Çыратăн пулсан – лайăх çыр, е пачах ан çыр. Либо писать хорошо, либо совсем не писать.

25. Журналистика факультечĕн вĕрентӳ программисенче сирĕн шутпа мĕн лайăх, мĕн çитмест.

26. Икĕ чĕлхепе çырма пултаракан журналиста епле хатĕрлемелле?

27. Литература енĕпе редакцилессин тĕп тĕллевĕсем.

28. Техника енĕпе редакцилессин уйрăмлăхĕсем.

29. Корректура вуланă тата редакциленĕ чухне асра тытмалли правилăсем.

30. Компьютер системи редакцилес ĕçе кĕртекен çĕнĕлĕхсем.

31. Журналист интернетпа усă курассин йĕркисем.

32. Корректорпа редактор ĕçĕсен уйрăмлăхĕсем.

33. Ал çырăвне радиохыпарлав валли хатĕрлесси.

34. Телекурав валли материал хатĕрлессин уйрăмлăхĕсем.

35. Студентсем хăйсем сĕннĕ темăсем.

ИККĔМĔШ ÇУР ÇУЛ

**Вĕренсе тухаканăн квалификаци ĕçĕп темисем**
**(Темы выпускных квалификационных работ)**

1. Тĕрĕслĕх тата хушса хуни журналистикăра (Правда и вымысел в журналистике).

2. Компьютер системи редакцилес ĕçе кĕртекен çĕнĕлĕхсем.

3. Журналист интернетпа усă курассин йĕркисем.

4. Публицистика чĕлхине литература енĕпе вăйлатмалли меслетсем.

5. Текстăн логика тĕлĕшĕнчи пахалăхĕсене хакласси.

6. Калуллă текстсен композицине йĕркеленин тĕсĕсем.

КУРС ĔÇĔН ТАТА ВĔРЕНСЕ ТУХАКАНĂН
КВАЛИФИКАЦИ ĔÇĔН ХУПЛАШКИСЕМ

*Приложени 1*

Федеральное агентство по образованию
Федеральное государственное образовательное учреждение
высшего профессионального образования
«Чувашский государственный университет имени И.Н. Ульянова»
Факультет журналистики
Кафедра литературного редактирования и стилистики

ДОПУСТИТЬ К ЗАЩИТЕ В ГАК
Зав. кафедрой литературного
редактирования и стилистики
канд. ист. наук, доцент
_______________И.Я. Тенюшев

«_____»______________2008 г.

ВЫПУСКНАЯ КВАЛИФИКАЦИОННАЯ РАБОТА

ОСОБЕННОСТИ ЯЗЫКА ЧУВАШСКИХ РАДИОПЕРЕДАЧ

Абликова Ольга Владимировна

Руководитель
канд. филол. наук, доцент
___________Л.А. Васильева
Автор работы
____________О.В. Абликова

Чебоксары 2008

*Приложени 2*

Федерацин вĕрентӳ агентстви
«И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕ»
Федерацин профессилле аслă пĕлӳ паракан патшалăх вĕрентӳ учрежденийĕ
Журналистика факультечĕ
Литература енĕпе редакцилесси тата стилистика кафедри

ПАКра ХӲТĔЛЕМЕ ИРĔК ПАРАС
Литература енĕпе редакцилесси
тата стилистика кафедрин пуçлăхĕ
истори ăслăлăхĕсен кандидачĕ

_____________И.Я. Тенюшев доцент

2008 çулхи ______ уйăхĕн ____ - мĕшĕ

ВĔРЕНСЕ ТУХАКАНĂН КВАЛИФИКАЦИ ĔÇĔ

ЧĂВАШ РАДИОКĂЛАРĂМĔСЕН ЧĔЛХИН УЙРĂМЛĂХĔСЕМ

Абликова Ольга Владимировна

Ертсе пыраканĕ
филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ
_________Л.А. Васильева доцент
Ĕç авторĕ
________________О.В. Абликова

Шупашкар 2008

*Приложени 3*

Федеральное агентство по образованию
Федеральное государственное образовательное учреждение
высшего профессионального образования
«Чувашский государственный университет имени И.Н. Ульянова»
Факультет журналистики
Кафедра литературного редактирования и стилистики

ДОПУСТИТЬ К ЗАЩИТЕ В КОМИССИИ
Зав. кафедрой литературного
редактирования и стилистики
канд. ист. наук, доцент
______________И.Я. Тенюшев

«____»____________2008 г.

КУРСОВАЯ РАБОТА

ОСОБЕННОСТИ РЕДАКТИРОВАНИЯ
ПОВЕСТВОВАТЕЛЬНЫХ ТЕКСТОВ

Дюкина Ольга Анатольевна

Руководитель
канд. филол. наук, старший преподаватель
______________________Г.В. Хораськина
Автор работы
_________________________О.А. Дюкина
ФЖ-23-04

Чебоксары 2008

*Приложени 4*

Федерацин вĕрентӳ агентстви
Федерацин профессилле аслă пĕлӳ паракан патшалăх вĕрентӳ учрежденийĕ
«И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕ»
Журналистика факультечĕ
Литература енĕпе редакцилесси тата стилистика кафедри

КОМИССИРЕ ХӲТĔЛЕМЕ ИРĔК ПАРАС
Литература енĕпе редакцилесси
тата стилистика кафедрин пуçлăхĕ
истори ăслăлăхĕсен кандидачĕ

________________И.Я. Тенюшев доцент
2008 çулхи ______ уйăхĕн ____ - мĕшĕ

КУРС ĔÇĔ

КАЛУ ТЕКСЧĔСЕНЕ РЕДАКЦИЛЕССИН УЙРĂМЛĂХĔСЕМ

Дюкина Ольга Анатольевна

Ертсе пыраканĕ
филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ
__________________Г.В. Хораськина
аслă преподаватель
Ĕç авторĕ
_____________________О.А. Дюкина

Шупашкар 2008

**Библиографи кӑтартӑвӗсене йӗркелесси**

*Пӗр автор кӗнеки*

*Книга с одним автором*

Балабанов, И.Т. Валютные операции /И.Т. Балабанов. – М.: Финансы и статистика, 1993. – 144 с.

*Икӗ автор кӗнеки*

*Книга с двумя авторами*

Корнелиус, Х. Выиграть может каждый: как разрешать конфликты /Х. Корнелиус, З. Фэйр; пер. П.Е. Патрушева. – М.: Стрингер, 1992. – 116 с.

*Виҫӗ автор кӗнеки*

*Книга с тремя авторами*

Киселев, В.В. Анализ научного потенциала /В.В. Киселев, Т.Е. Кузнецова, З.З. Кузнецов. – М.: Наука, 1991. – 126 с.

*Пилӗк е нумайрах автор кӗнеки*

*Книга с пятью авторами и более*

Теория зарубежной судебной медицины: учеб. пособие/ В.Н. Алисеевич [и др.]. – М.: Изд-во МГУ, 1990. – 40 с.

*Пухӑм*

*Сборник*

Малый бизнес: перспективы развития: сб. ст. / под ред. В.С. Ажаева. – М.: ИНИОН, 1991. – 147 с.

*Официаллӑ документсем*

*Официальные документы*

Конституция (Основной закон) Российской Федерации: офиц. текст. – М.: Маркетинг, 2001. – 39 с.

*Диссертацисем*

*Диссертации*

Медведева, Е.А. Высшее библиотечное образование в СССР: проблемы формирования профиля: (история, соврем. со-

стояние, перспективы): дис. ... канд. пед. наук: защищена 12.04.2000: утв. 24.09.2000 /Е.А. Медведева. – М., 2000. – 151 с.

*Диссертацин автореферачӗ*

*Автореферат диссертации*

Еременко, В.И. Юридическая работа в условиях рыночной экономики: автореф. дис. ... канд. юрид. наук: защищена 12.02.2000: утв. 24.06.2000/ В.И. Еременко. – Барнаул, 2000.- 20 с.

*Сочиненисен пухӑмӗнчен*

*Из собрания сочинений*

Герцен, А.И. Тиранство сибирского Муравьева / А.И. Герцен //Собр. соч.: в 30 т. – М., 1998. – Т. 14. – С. 315-316.

*Пухӑмран*

*Из сборника*

Андреев, А.А. Определяющие элементы организации научно-исследовательской работы /А.А. Андреев, М.Л. Закиров, Г.Н. Кузьмин// Тез. докл. межвуз. конф. Барнаул, 14-16 апр. 1997 г. – Барнаул, 1997. – С. 21-32.

Сахаров, В. Возвращение замечательной книги: заметки о романе М.А. Булгакова «Мастер и Маргарита» /В.Сахаров //За строкой учебника: сб. ст. – М., 1989. – С. 216-229.

*Сӑмахлӑхран*

*Из словаря*

Художник к кино //Энциклопедический словарь нового зрителя. – М., 1999. – С. 377-381.

*Кӗнеке сыпӑкӗнчен е пайӗнчен*

*Глава или раздел из книги*

Костиков, В. Не будем проклинать изгнанье /В. Костиков //Пути русской эмиграции. – М., 1990. – Ч.1, гл. 3. – С. 59-86.

Муравьев, А.В. Культура Руси IX – первой половины XII в./ А.В. Муравьев, А.М. Сахаров // Очерки истории русской культуры IX-XVII вв.: кн. для учителя. – М., 1984. – Гл. I. – С. 7-74.

*Журналтан*

*Из журнала*

Гудков, В.А. Исследование молекулярной и надмолекулярной структуры ряда жидкокристаллических полимеров /В.А. Гудков //Журн. структур. химии. – 1991. – Т. 32, № 4. – С. 86-91.

Афанасьев, В. Святитель Игнатий Брянчанинов и его творения /В. Афанасьев, В. Воропаев //Лит. учеба. – 1991. – Кн. 1. – С. 109-118.

*Хаçатран*

*Из газеты*

Антонова, С. Урок на траве: заметки из летнего лагеря скаутов /С. Антонова //Известия. – 1990. – 3 сент.

Горн, Р. Скауты вышли из подполья /Р. Горн //Учит. газ. – 1991. - 15 сент. (№ 38) – С. 9.

*Малалла та тухас кăларăмран*

*Статья из продолжающегося издания*

Колесова, В.П. К вопросу о реформе власти / В.П. Колесова, Е.Ю. Шуткина //Вестн. Алтайс. акад. экономики и права. – 2001. – Вып. 5. – С. 47-50.

*Пичетленĕ вырăнсен ячĕсене çапла кĕскетме йышăннă:*

Москва – М.

Ленинград – Л.

Петербург – Пб.

Петроград – Пг.

Санкт-Петербург – СПб.

Нижний Новгород – Н. Новгород

Ростов-на-Дону – Ростов н/Д.

Чебоксары – Чебоксары

Шупашкар – Шупашкар

Ытти вырăнсен ячĕсене туллин çырмалла.

Ăслăлăх ĕçĕсенче литература списокне хушса параççĕ. Ку список икĕ тĕрлĕ пулать темелле: усă курнă литература списокĕ, усă курмалли литература списокĕ.

Икĕ тĕрлĕ списокĕнче те çăлкуççене авторсен хушамачĕсен алфавичĕ тăрăх вырнаçтараççĕ. Вăл списока темăсем тăрăх ушкăнлама та юрать, кашни ушкăнтах список алфавит тăрăх йĕркеленет. Тĕслĕхрен, çакнашкал ушкăнсем тума пулать:

I. Официаллă материалсемпе документсем.

II. Кĕнекесем, брошюрăсем.

III. Хаçат-журналти материалсем.

IV. Тĕпчене материалсем.

Списокра пĕр хайлавăн темиçе кăларăмне асăнсан, вĕсене хронологин таврӑнаç (кутăнла) йĕркипе вырнаçтараççĕ (малтан – чи юлашки кăларăм, унтан ун хыççăнхисем, чи кайра – пĕрремĕш кăларăм).

Хушса панине çак кĕнеке тăрăх йĕркеленĕ: Гужова И.К., Молибоженко Р.А., Накорякова К.М., Сурикова Т.И. Литературное редактирование: Материалы для занятий. М.: Изд-во МГУ, 2000. С. 145-152. Приложение 2. Унсăр пуçне, курс тата диплом ĕçĕсене çырса хатĕрлеме пулăшакан сĕнӳсемпе усă курнă.

## Текста юсанă чухне усă курмалли паллăсем

### *Улăштару паллисем*

пĕр е темиçе сас паллие улăштарасси 

пĕчĕк сас паллие пысăккипе = (сас палли айне)

пысăк сас паллие пĕчĕккипе = (сас палли тăррине)

### *Кăларса пăрахтарассин паллисем*

сас паллисене, чарăну паллисене 

сăмаха, юнашар тăракан темиçе сăмаха 

икĕ е темиçе йĕркене 

### *Кĕртсе лартассин паллисем*

сас паллисене 

сăмаха, темиçе сăмаха 

юнашар тăракан темиçе предложение 

### *Куçарса лартассин паллисем*

икĕ сас паллие е сăмахсен икĕ ушкăнне 

юнашар тăраканнисем
икĕ сăмахран ытларах пулсан 


пĕр страницăра пĕр вырăнтан тепĕр вырăна
(пĕр йĕрке е темиçе йĕрке урлă) 

пĕр йĕркерен тепĕрне,
юнашар пулсан
тепĕр страницăна:



йĕри-тавраункă çыр,
страница хĕрринче хăш
страницăна куçармаллине кăтарт




текста куçарнă страницăра
ăçтан илнине кăтартаççĕ




маларахри страницăна:

куçармалли текст тавра ункă тăваççĕ,
ăçта куçармаллине кăтартаççĕ




текста куçарнă страницăра
ăçтан илнине кăтартаççĕ




***Пушă вырăн хăварассин паллисем***

сăмахсене уйăрасси



сас паллисем, сăмахсем хушшинчи
вырăна пĕтерессе



йĕркесем хушшинчи пушă вырăна сахаллатасси



йĕркесем хушшинчи пушă
вырăна ўстерессе



***Абзацпа е абзацсăр***

абзац туса наборла



абзац тунине пĕтер



***Шрифтпа палăртассин паллисем***
***(палăртмалли текста тивĕçлĕ паллăпа кăтартаççĕ, хĕрринче тепре аса илтереççĕ)***

| | | |
|---|---|---|
| сайралатса наборла | __ __ __ | сайр. |
| çурма хурапа наборла | ________ | ç/х |
| курçивпа наборла | ∼∼∼∼ | курс |
| юсанине пăрахăçлассин палли | . . . . . . . . . | |

## ТУПМАЛЛИ

Умĕн калани .......................................................................... 4
Пĕрремĕш çур çул. Килте пурнăçламалли ĕçсем .....................9
Пĕрремĕш практика занятийĕ..................................................9
Иккĕмĕш практика занятийĕ...................................................10
Виççĕмĕш практика занятийĕ..................................................11
Тăваттăмĕш практика занятийĕ...............................................13
Пиллĕкмĕш практика занятийĕ................................................14
Улттăмĕш практика занятийĕ...................................................14
Çиччĕмĕш практика занятийĕ..................................................16
Саккăрмĕш практика занятийĕ................................................19
Тăххăрмĕш практика занятийĕ................................................21
Тĕрĕслев валли янтăланă материал. .......................................21
Харпăр хăй тĕллĕн пурнăçламалли хăнăхтарусем......................22
Пĕрремĕш çур çул. Зачет тытмалли ыйтусем............................24
Иккĕмĕш çур çул. Килте пурнăçламалли тата тĕрĕслемелли хăнăхтарусем.........................................................................25
Пĕрремĕш практика занятийĕ..................................................25
Иккĕмĕш практика занятийĕ...................................................27
Виççĕмĕш практика занятийĕ..................................................28
Тăваттăмĕш практика занятийĕ...............................................32
Пиллĕкмĕш практика занятийĕ................................................34
Улттăмĕш практика занятийĕ...................................................36
Çиччĕмĕш практика занятийĕ..................................................40
Саккăрмĕш практика занятийĕ................................................43
Тăххăрмĕш практика занятийĕ................................................43
Харпăр хăй тĕллĕн пурнăçламалли хăнăхтарусем......................46
Запаслăх занятисен планĕсем..................................................47
Хушма занятире пурнăçламалли ĕçсем.....................................48
Иккĕмĕш çур çул. Вĕренсе тухаканăн квалификаци ĕçĕн темисем ...........................................................................55
Курс ĕçĕн тата вĕренсе тухаканăн квалификаци ĕçĕн хушлашкисем ..........................................................................56
Библиографи кăтартăвĕсене йĕркелесси ..................................60
Текста юсанă чухне усă курмалли паллăсем ............................64

25 с

*Учебное издание*

**Тенюшев Иван Яковлевич**

**ЛИТЕРАТУРНОЕ РЕДАКТИРОВАНИЕ**

Практикум

Редактор *Н.С. Орлова*

Подписано в печать 15.10.08. Формат 60х84/16.
Бумага газетная. Печать оперативная. Гарнитура Times.
Усл. печ. л. 3,96. Уч.-изд. л. 3,74. Тираж 200 экз. Заказ № 457.

Издательство Чувашского университета
Типография университета
428015 Чебоксары, Московский просп., 15